24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ФЕВРАЛЬ 12 КĔÇНЕРНИКУН 36 (6061) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Кашни çамрăк выльăха пăхса çитĕнтерер

Пирĕн колхозсенчи животноводсен çитĕнĕвĕсем иртнĕ çулта пĕчĕккĕ пулмарĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç нумай малалла кайрĕ. Иртнĕ çулта пирĕн çĕнĕ фермăсем хутшăнчĕç — республикăра эпир 236 колхозра сысна ферми, 65 колхозра сурăх ферми çĕнĕрен организацилерĕмĕр. Фермăсенчи выльăхсем йышланчĕç. 1940 çултипе танлаштарсан, иртнĕ çулта мăйракаллă шултра выльăхсем 21,1 процент, сыснасем 34,2 процент, сурăхсемпе качакасем 28 процент ÿсрĕç. Пирĕн фермăсем халь хăйсен выльăх-чĕрлĕхĕсенчен пысăк тупăшсем илекен пулчĕç. Тĕслĕхрен эпир Çĕрпÿ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри фермăна кăтартса пама пултаратпăр. Ку асăннă колхозра кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 1941 çулта 3.010 литр сĕт суса илнĕ. Сăвакан ĕнерен 2.500—3.000 литр е ытларах суса илекен фермăсем халь пирĕн сахал мар ĕнтĕ.

Анчах совет çыннисем нихăçан та хăйсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем ялан хăйсем тунă ĕçсене тишкерсе тухса çитменлĕхсене палăртаççĕ, малашне тумалли пысăк ĕçсен планĕсене туса, тата тимлĕнрех, тата вăйлăнрах ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах халь нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хаяр та аслă çапăçу пынă вăхăтра, хамăр тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларас кăмăл-туйăмсем пирĕн пачах пулмалла мар. Пĕтĕм вăя, пĕтĕм пултарулăха пирĕн халь пысăкрах çитĕнÿсем тăвас ĕçе хумалла. Кашни колхозникăн, кашни колхозницăн кирек мĕнле ĕçре те вăрçă чухнехи пек, фронтри пек хастарлăн ĕçлемелле. Фронт мĕн ыйтать, фронта мĕн кирлĕ, çавна пирĕн пĕтĕмпех туса памалла. Фронт халь пирĕнтен ялхуçалăх продукчĕсем ытларах туса пама ыйтать, колхоз фермисенче, çавăн пекех колхозниксен хуçалăхĕсенче те кашни çамрăк выльăха пăхса çитĕнтерме хушать.

Çак задачăна та пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем ăнăçлăн пурнăçлаççĕ. Шăхасан районĕнчи «Трактор» колхозра Николаева телятница, хăй пăхакан 9 ĕнерен 9 пăру илсе, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Комсомольски районĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозра Баева колхозница 47 пăру, Волкова юлташ 100 сурăхран 193 путек илсе пăхса çитĕнтернĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз ферминче пĕр сысна аминчен 20-шер çăвăр илеççĕ. Шăхасан районĕнчи Шоркассинчи «Большевик» колхозри сысна ферминче ĕçлекен Егор Афанасьев иртнĕ çулта нормăпа 88 сысна çăвăрĕ пăхса çитĕнтерес вырăнне 127 çăвăр пăхса çитĕнтерме пултарнă.

Çакнашкал паха тĕслĕхсене нумай кăтартса пама пулать. Вĕсем пурте пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай туса пама чĕнсе каланипе хавхаланса нихăçанхи пек мар хастарлăн ĕçлени çинчен каласа параççĕ. Нумай колхозсем хăйсен государство умĕнчи парăмĕсене иртнĕ çулта срокченех парса татрĕç, малта пыракан колхозсем хăйсен çак çулхи парăмĕсене те аванс шучĕпе парса татаççĕ. Вăрнар, Элĕк, Çĕмĕрле районĕсенчи колхоз фермисем хăйсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес планĕсене тултарчĕç. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем чăн-чăнах фронтри пек ырми-канми ĕçлеççĕ, колхоз выльăхĕсене хăйсен выльăхĕсене пăхнă пек юратса пăхаççĕ, кашни çамрăк выльăха пăхса çитĕнтерме тăрăшаççĕ.

Çапах та пур колхозсенче те çавнашкал ĕçлеççĕ тесе калама пултараймастпăр-ха. Нумай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, уйрăмах çамрăк выльăхсене пурне те пăхса çитĕнтерес ĕç тивĕçлĕн пулса пымасть. Чылай фермăсенче çамрăк выльăхсем валли çуртйĕрсем çитмеççĕ, пуррисем те сивĕ, таса мар. Выльăх апачĕсене типтерлĕн тыткаласа выльăхсене вăхăтра тата кирлĕ таран çитермеççĕ. Çакна пула ĕнтĕ Йĕпреç районĕнчи «Чувашия» колхозри сысна ферминче 70 çурă вилнĕ. Çавнашкалах Çĕрпÿ районĕнчи «Канаш» колхозра 46 çурă, «6 августа» колхозра 42 путекрен 19 путек вилнĕ. Çавăнпа вара выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес план тулмасть. Шăхасан районĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарайман колхозсем 18 шутланаççĕ. «Звезда» колхозăн ферминче, сăмахран, 10 ĕне пулмалла пулнă. Паянхи кун тĕлне колхоз ферминче пĕтĕмпе те 2 ĕне çеç. Çакăн пек тĕслĕхсене эпир Çĕрпÿ районĕнче те куратпăр. «1-ое Мая» колхозри ĕнесен ферминче 6 ĕне пулмалла пулсан, вĕсен халĕ 2 ĕне, «17 партсъезд» колхозри сурăх ферминче 56 сурăх усрас вырăнне пурĕ те 6 сурăх çеç усраççĕ. Уйрăмăнах пирĕн колхозсенче лашасен хисепне ÿстересси çителĕксĕр пулса пырать.

Чăнах та, ку тĕлĕшпе те пирĕн лайăх ĕçлекен колхозсем, районсем çук мар. Лашасене юратса пăхакан, вуншар тихасем пăхса колхозсене тĕреклĕ лашасем çитĕнтерсе панă конюхсем пирĕн çĕршерĕн шутланаççĕ. Вăрнар районĕнчи Кăмашри Сталин ячĕпе тăракан колхозри Ефимов 10 çул хушши конюх пулса ĕçлет. Вунă çул хушшинче вăл колхоза темиçе лаша çитĕнтерсе панă, вăл пăхнă лашасем нумайĕшĕсем Хĕрлĕ Çар валли юрăхлă пулчĕç. Шăхасан районĕнчи Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхозри конюх Г. Кушаковпа Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозри конюх П. Волков 25-шер тиха пăхса çитĕнтерес вырăнне 36-шар тиха пăхса çитĕнтернĕ.

Колхозсем хăйсен лашисенчен пĕр пайне фронта пачĕç. Апла пулсан, лашасен хисепне ÿстерес тĕлĕшпе кăçал пирĕн темиçе хут лайăхрах ĕçлемелле пулать. Кăçал пирĕн çамрăк выльăхсене лашасем енĕпе те, ытти выльăхсем енĕпе те пурне те пăхса çитĕнтермелле. Кашни çамрăк выльăха пăхса çитĕнтересси колхозсемшĕн кăçал çирĕп закон пулса тăмалла, колхозсен те, колхозниксен те ăна çирĕппĕн пурнăçа кĕртмелле. Çамрăк выльăхсене хупса усракан витесене ăшă, таса тытмалла, вĕсене вăхăтра тата кирлĕ таран çитермелле, колхоз председателĕсен хăйсен фермисенче çамрăк выльăхсене колхозниксем мĕнле пăхнине куллен тĕрĕслемелле, ĕçри çитменлĕхсене палăртса вĕсене çийĕнчех пĕтерме пулăшмалла.

Партипе советсен вырăнти органĕсем чылайĕшĕ фермăсен ĕçĕсемпе куллен интересленсе пымаççĕ, фермăсене куллен пулăшас, вĕсене куллен ертсе пырас ĕçе вăхăтран вăхăта туса пыраççĕ. Парти райкомĕсемпе райисполкомсем, вĕсенчен те ытларах райçĕрĕçпайĕсем колхозсемпе фермăсене куллен пулăшса пыни, вĕсене куллен ертсе пыни кирлĕ. Çакна сăмахпа мар, кашни кунхи ĕçре туса пымалла. Кăçал пирĕн тата ытларах выльăхсем пăхса çитĕнтерме, фронтпа çĕршыв валли тата ытларах ялхуçалăх продукчĕсем туса илме тăрăшас пулать, çапла эпир аслă Сталинăн чĕнĕвне ăнăçлăн пурнăçлăпăр.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ Франклин Д. Рузвельт М. И. Калинин патне янă телеграмма

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ çуралнă кун тĕлне СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин ун патне саламлă телеграмма янă. М. И. Калинин Франклин Д. Рузвельтран çакăн пек ответлă телеграмма илнĕ:

Унăн превосходительствине Михаил Калинина, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне.

Мускав.

Эпĕ çуралнă кун тĕлне мана сывлăх сунса саламланине эпĕ пĕтĕм чĕререн хаклатăп, мĕншĕн тесен çак телеграмма вăл пирĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшман тапăнса вĕнине ăнăçлăн та мухтавлăн сирсе пыракан государствăн пуçлăхĕ ярса панă телеграмма пулса тăрать. Совет Союзĕнчи халăхсем агрессорсен ордисене татăклăн та ăнăçлăн сирсе пыни хăйсен никама пăхăнманлăхне хÿтĕлессишĕн кĕрешекен ытти нацисене хавхалантарса пырать. Агрессиллĕ вăйсене поражени кÿме пулăшас тесе, нумай вăхăтлăха пыракан тĕрĕслĕхлĕ мир тăвас тесе, эпир хамăр вăй çитнĕ таран мĕн тума пултарнине малашне те пурне те туса пырассине шанса тăма пултаратăр.

Франклин Д. Рузвельт.

Ирĕке кăларнă районсене медицина тĕлĕшпе пулăшу параççĕ

ЛЕНИНГРАД, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Ленинград облаçĕн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хулисемпе ялĕсенче фашистла варварсем ишĕлтерсе хăварнă больницăсене, амбулаторисене, ача яслисене юсаса йĕркене кĕртеççĕ. Халăха медицина тĕлĕшпе пулăшу парасси йĕркене кĕрсе пырать.

Тихвинра ишĕлмесĕр юлнă çуртсенчен пĕринче больница уçнă. Халĕ больницăн икĕ отделенийĕ ĕçлеме те тытăннă. Амбулатори, аптека уçнă. Сывăх вăхăтсенчех хула больницине юсаса çитерме палăртнă. Ача яслисем уçаççĕ.

Киришски, Волхов, Кĕçĕн Вишера районĕсенче медицина учрежденийĕсем уçнă.

Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен облаçри отдел ирĕке кăларнă районсене квалификациллĕ специалистсем ярать. Вырăнсене халĕ ĕнтĕ 20 врач туха та кайнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, тăшмана хирĕç çапăçса, малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 9-мĕшĕнче нимĕçсен 4 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Февралĕн 9-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен пехотăпа çар грузĕсем турттарса пыракан 110 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 35 лавне, зенитлăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, чугунçул çинчи грузсем тиенĕ 10 вагона, горючи тултарнă 20 цистернăна взрыв туса сирпĕнтернĕ, противник пехотине пĕр батальон ытла сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Беззубов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ), пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 4 пункта йышăнса илсе, тăшманăнне 18 оруди, 5 автомашина, 72 велосипед, 6 пулемет, танксене хирĕç пемелли 3 пăшал, тĕрлĕрен çар снаряженийĕ тиенĕ 27 лав, 150 пин винтовка патронĕ, 2.382 мина, 1.849 ручной граната, 2.100 ракета тата çапăçу хирĕнчен чакакан нимĕç салтакĕсем пăрахса хăварнă 426 винтовка тытса илнĕ. Тепĕр участокра Соловьев юлташăн боецĕсем, противника В. ялĕнчен хăваласа кăларса, нимĕçсен çарĕн главнокомандованийĕн резервне кĕрекен артиллерин 41-мĕш полкĕнчи салтаксемпе офицерсене 200 çынна вĕлернĕ тата 28 грузовой, 11 çăмăл автомашина, 13 мотоцикл, тĕрлĕрен калибрлă 8 оруди, 8 автоцистерна, 2 тягач, боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ.

* * *

Красноармеец Кучкар Ахмед Дурдиев геройла ĕç тунă. Нимĕçсен позицийĕсене атакăланă вăхăтра вăл противникăн ДЗОТ-не чи малтан пырса кĕнĕ те тăшман салтакĕсен ушкăнĕпе пĕр пĕччен тĕл пулнă. Анчах та хăюллă боец çухалса кайман. Пĕр гитлеровеца прикладпа çапса ÿкернĕ те Дурдиев нимĕçсен пулеметчикĕсем çинелле, пирĕн войскăсене куçма чăрмантаракансккерсем çинелле, ыткăннă. Хаяр тытăçура Дурдиев винтовкăсăр тăрса юлнă. Вăл вара гитлеровецăн аллинчи винтовкăна туртса илнĕ те нимĕç пулеметчикĕсене пере-пере пăрахнă. Ун çине сиксе ÿкнĕ нимĕç офицерне вăл кĕреçепе çапса вĕлернĕ. Нимĕçсен пĕр унтер-офицерĕпе икĕ салтакне тыткăна илсе, Дурдиев вĕсене трофейăсемпе пĕрлех хăйĕн чаçне илсе пынă.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ офицерĕ çумĕнче,— унăн хушаматне палăртма май килмен, —дневник тупнă. Дневникăн авторĕ иртнĕ çулти декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче Германирех пулнă, вăл Вельсе хулинче салтака çĕнĕрен илнĕ çынсене вĕрентнĕ. Декабрĕн 11-мĕшĕнче вăл Варшавăна, центральнăй войсковой группăри офицерсен «резервне» тухса кайсси çинчен приказ илнĕ, кайран Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне çитнĕ. Аялта нимĕç офицерĕн дневникĕнчи хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«**Декабрĕн 15-мĕш.** Кăнтăрла Варшава тăрăх çапкаланса çÿрерĕм. Кунта сывă çынсенчен чирлисем ытларах, анчах та сыввисем те хăйсен вилĕмĕ патнелле каяççĕ.

Декабрĕн 20-мĕш. Çул çине тухса кайрăмăр. Малазевитца çитрĕмĕр. Сизĕ баракçенче сывăртăмăр. Хăшпĕрисем ятлаçрĕç, политика çинчен калаçрĕç.

Декабрĕн 23-мĕш. Санитарнăй поезд малалла каймасть. Эпĕ почтовăй поезд çинче Минска çитрĕм. Поезд малалла кайма пултараймасть, мĕншĕн тесен малта чугунçул крушенийĕ пулнă.

Декабрĕн 24-мĕш. Поезд малалла каясси кунĕпех кĕтетĕп. Нимĕнле йĕркелĕх те çук.., пурте тарăхса çитрĕç...

Декабрĕн 26-мĕш. Çĕрле офицерсен баракĕсенче пултăм. Унта аманнă офицерсем питĕ нумай. Шухăш-кăмăлсем йывăр. Вырăссем Калинин, Калуга патĕнчи позицисене тытса илни, чăтма çук сивĕ тăни, Браухич, Бок, Рундштедт отставкăна тухни, апат-çимĕç тăратас ĕçре пысăк йывăрлăхсем пулни,—çаксем пурте войскăсен шухăш-кăмăлне пусарăнтараççĕ.

Декабрĕн 27-мĕш. Тĕрлĕрен калаçусем тăрăх çарта çакă курăнать. Малтан пулнă шухăш-кăмăлсем халь пĕтнĕ.. Тылри служба йĕркеллĕ мар, эпир кунта юлма пултараймастпăр. Йĕркелĕх çук..

Январĕн 1-мĕш. 6-мĕш армейски корпуса пырса çитрĕм. Мана полковник Гут патне ячĕç. Вăл мана кунта полевой жандармери хăваласа килнĕ ротăна малалла илсе кайма приказ пачĕ. Маршевăй рота çине пăхсан, фронтри япăх положение курма пулать.

Январĕн 2-мĕш. 161-мĕш пехотнăй дивизие каясси çинчен приказ илтĕм. Кунĕпех чаçсем каялла чакнине сăнаса тăтăм. Çакă вăл макăртмаллах кÿрентерет.

Январĕн 9-мĕш. Кункаçипех ура çинче, канман.. Çавтери йĕркесĕрлĕх... Нимĕн те тума çук...»

* * *

Бакури нефтяниксем нефть кăларассине татти-сыпписĕр ÿстерсе пыраççĕ. Бакинецсем çак кунсенче планран иртерсе кăларнă виçĕ эшелон бензина фронта ăсатнă.

Февралĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă.

* * *

Эрастов юлташăн чаçĕнчи боецсем (Хĕвеланăç фрончĕ), халăх пурăнакан икĕ пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларса, противникăнне 60 автомашина, 6 оруди, 14 пулемет, 33 мотоцикл тата 11.400 винтовка патронĕ тытса илнĕ.

Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн стрелковăй часть, тăшмана хирĕç хаярăн çапăçса, нимĕçсенне 4 танк, 4 оруди пĕтерсе тăкнă, 13 пулемет, танксене хирĕç пемелли 2 оруди, 2 автомашина, 50 велосипед, боеприпассем тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ тиенĕ 12 лав тытса илнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын вилсе юлнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, пĕр кун хушши çапăçса, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна пĕтерсе тăкнă. Совет артиллерисчĕсемпе разведка тăвакан группăсем нимĕçсен 3 танкне, 6 орудине, 5 станковăй пулеметне, 3 минометне пĕтерсе тăкнă тата противникăн йывăçпа çĕртен купаласа тунă 46 огневой точкипе блиндажне çапса аркатнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник, чылай вăйлă подкреплени илсе, пирĕн чаçсене хирĕç контратака тума хăтланнă. Нимĕçсене тĕл тивекен вут-çулăмпа кĕтсе илсе, пирĕн боецсем тăшмана пысăк çухатусем кÿрсе, сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 850 вилли выртса юлнă, 20 нимĕçе тыткăна илнĕ, вĕсен хушшинче нимĕçсен 85-мĕш пехотнăй полкĕнчи 1-мĕш батальонăн командирĕ—майор пур.

* * *

Красноармеец-сапёрсем Зотов, Егоров, Козлов тата Епифанов юлташсем П. ялĕшĕн пынă çапăçура, минăсене пĕлсе лартса тухса, нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ, Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн çапăçать. Нимĕçсем фронталла боеприпассем турттаракан çул çинчи кĕпере партизансем вут тĕртсе çунтарса янă. Çавна пула çулпа çÿресси икĕ кунлăха чарăнса ларнă. Тепĕр темиçе кунран хăюллă патриотсем чугунçул кĕперне взрыв туса сирпĕнтернĕ. Тракт çинче боецсем тăшманăн çăмăл машинине пĕтерсе тăкнă тата нимĕç генералне вĕлернĕ. Партизансен групи çул çинче юр тасатакан колонна çине пырса тапăннă. Нимĕçсен 4 унтер-офицерне пĕтерсе тăкса, партизансем тыткăна лекнĕ 25 красноармееца çав колоннăран ирĕке кăларнă.

* * *

Нимĕçсен 262-мĕш дивизийĕн 485-мĕш полкĕнчи 9-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Адам Рейнбардт çапла каласа панă: «Юлашки çапăçура кăна пирĕн ротăра 36 салтак вилсе тата аманса пĕтрĕ. Ротăра 20 çынран ытла мар тăрса юлчĕ. Стройран тухнисен шутĕнче, вилнисемпе аманнисемсĕр пуçне, тăм илсе янисем нумай. Апат-çимĕç тÿсме çук япăх. Уйрăмах çăкăр çитмен пирки аптăратпăр. Юлашки вăхăтра эпир çăкăр кунне 100—150 грамран ытла мар илнĕ... Пирĕн ротăран 6 çын тарчĕ, вĕсене халĕ пыраççĕ. Вĕсенчен иккĕшне — Рихард Ганпа Трайда эпĕ лайăх пĕлетĕп. Ыттисем нумаях пулмасть резервран килнĕ, вĕсен хушамачĕсене эпĕ астăваймастăп».

* * *

Хĕвеланăç Казахстан облаçĕнчи Приуральнăй районра отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа 209 хĕрарăм трактор ĕçне вĕренсе, трактористкăсен ятне илнĕ. Халĕ трактористсем хатĕрлекен курсра татах 231 хĕрарăм вĕренет.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн войсковой чаçĕсене наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе

1. Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн войскисен 26-мĕш пограничнăй отрядне.
2. Артиллерин 265-мĕш армейски полкне.
3. Авиацин 69-мĕш истребительнăй полкне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 10-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене **Ленин орденĕпе «Золотая Звезда»** медалĕ парса **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Капитана Михаил Егорович **Асташкина.**
2. Лейтенанта Яков Георгиевич **Бреуса.**
3. Старший лейтенанта Агей Александрович **Елохина.**
4. Лейтенанта Иван Георгиевич **Королева.**
5. Старший политрука Семен Андреевич **Куницана.**
6. Старший лейтенанта Алексей Алексеевич **М[illegible]анова.**
7. Старший лейтенанта Петр Варнавович **Полоза.**
8. Капитана Юрий Борисович **Рыкачева.**
9. Лейтенанта Василий Александрович **Серогодские.**
10. Кĕçĕн лейтенанта Владимир Поликарпович **Симонока.**
11. Лейтенанта Виталий Тимофеевич **Топольские.**
12. Старший лейтенанта Алексей Тихонович **Череватенкона.**
13. Майора Лев Львович **Шестакова.**
14. Лейтенанта Михаил Ильич **Шилова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 10-мĕш.

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи тата рядовой составне орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, çаксене наградăланă:

Ленин орденĕпе — лейтенанта **А. В. Алелюхина,** капитана **В. И. Барковские,** старшинана **П. Р. Ровинские,** полковника **С. И. Сереброва,** инженернăй войскăсен генерал-майорне **А. Ф. Хренова** тата ыттисене те, пĕтĕмпе 40 çынна.

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—291 çынна;
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе—545 çынна;
«За отвагу» медальпе—435 çынна;
«За боевые заслуги» медальпе — 427 çынна наградăланă.

(ТАСС).

Çуракине большевикла хатĕрленер

Доронин тата Шмидт ячĕпе тăракан колхозсенче

КАНАШ. (**«Чăваш Коммуни» корреспонденчĕ**). Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ хăйĕн заседанийĕсенчен пĕринче çуракине февралĕн 10-мĕш тĕлне хатĕрленсе çитме йышăнса хăварнă. Унтанпа вăхăт самаях иртрĕ ĕнтĕ, палăртнă срок—февралĕн 10-мĕшĕ те иртрĕ. Анчах колхоз хăй йышăнса хăварнине пурнăçлаймарĕ.

Колхозăн кăçал 403 гектар çине суртырри акса хăвармалла. Çураки ăнăçлăхне ĕç вăйĕпе вăрлăх çителĕклĕ пурри татса парать. Хальхи вăхăтра колхозăн вика тата клеверпа кок-сагыз вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Правлени вĕсене тупас тесе ку таранччен нимĕн те туман.

Вăрлăхсене тасатма уйрăм колхозниксене хушнă. Вĕсем вăрлăхсене сортласа пĕтермен. Февралĕн 7-мĕш тĕлне пурĕ те 686 центнер çеç тасатнă.

Ялхуçалăх машинисем колхозăн çителĕклĕ: 24 плуг, 6 сеялка. Анчах вĕсене кирлĕ пек пăхса усрамаççĕ. Сеялкăсене халь çеç юр айĕнчен чавса кăларнă.

— Юсав ĕçĕсем сÿрĕкрех пыраççĕ-ха. Пĕтĕмпе те 10 плуг анчах юсарăмăр,—тет колхоз председателĕ Филиппов юлташ.

Урапасемпе çÿресене вара юсама тытăнман та. Ут таврашĕсене те пĕтĕмпе тенĕ пекех çĕнĕрен хатĕрлемелле.

Колхозăн уя 4 пин лав тислĕк, 3 пин лав торф кăлармалла. Паянхи куна тислĕк 900 лав кăларнă, торфне пĕр лав та кăларман. Минераллă удобренисене те пачах кÿрсе килмен.

Çапла вара, Доронин ячĕпе тăракан колхозăн çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе туса çитермен ĕçсем чылай.

Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленме тытăнман та. Ялхуçалăх машинисене пĕрне те юсаман. Колхозăн пурĕ 3 сеялка, 22 плуг, урапасемпе çÿресем нумай юсамалла. Плугсене тимĕрçĕ лаççисем патне кĕркуннех мĕнле пырса лартнă, унта вĕсем çапликех лараççĕ. Вĕсене тимĕрçĕ алли пырса лекмен-ха. Колхозăн тимĕрçĕ лаççисем начар ĕçлеççĕ.

Колхозăн кăçал 45 гектар çинче çĕрулми лартса хăвармалла. Правлени председателĕ Суранов юлташ каланă тăрăх, колхозăн çĕрулми вăрлăхĕ çитет, районри çĕрĕç пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, колхозăн 800 центнер çитмест.

Çĕре çемçетме удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе ку таранччен колхоз нимĕн те туман. План тăрăх уя 3.800 тонна торф, 10.500 лав тислĕк кăлармалла, 140 центнер кĕл, 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалла. Колхозри 9 бригадăра паянхи кунччен пĕтĕмпе те 32 центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăшт пухнă, тислĕкпе торф уя пачах та кăларман. Çавăн пекех, минераллă удобренисене те кÿрсе килмен.

Çураки çывхарса килет. Халĕ кашни кунпа, кашни сехетпе пĕлсе усă курни, çирĕп планпа ĕçлени кирлĕ. Паян тумалли ĕçсене ырана хăварни пулмалла мар. Доронин тата Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем пирки çакна каламалла çук-ха. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз çураки ĕçĕсен планне те туман.

Т. ИВАНОВ.

Калаçусенчен ĕçе куçрĕç

ШАХАСАН. Матьшури «Молодой колхозник» колхозра çуракине хатĕрлесси çинчен калаçкалатчĕç çеç. Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне пичетленĕ хаçатсем килсе çитсен, ĕç пĕтĕмпех улшăнчĕ. Малтанах чĕнĕве колхозниксем хушшинче сÿтсе яврĕç. Колхозниксем пурте Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне ырларĕç, хăйсем çуракине начар хатĕрленнине палăртрĕç.

Çакăн хыççăн çуракине хатĕрленме колхоз татăклăн тытăнчĕ. Колхозра халь ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсаççĕ. Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсем пухаççĕ, уя тислĕк турттараççĕ. Паянхи кун тĕлне уя пурĕ 106 тонна тислĕк кăларнă, 45 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 30 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ, 237 центнер вăрлăх тасатнă. Çак кунсенчех ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтереççĕ.

Колхозра кăтартуллă ĕçлекен колхозниксем сахал мар. Çавнашкал колхозниксенчен пĕри — Николай Максимов колхозник. Вăл 65 çулта, çапах та вăл колхоз ĕçĕнче ырми-канми ĕçлет. Иртнĕ çулта унăн çемьи 931 ĕçкунĕ тунă. Кăçал та Максимов юлташ ĕлĕкхи пекех колхозра тăрăшса ĕçлет. Халь вăл колхоз валли çÿресем тăвать, çĕмрĕк çÿресене юсать.

Ытти колхозсенче те Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе явнă хыççăн, çуракине васкавлăн хатĕрленме тытăнчĕç. Сăмахран, Киров ячĕпе тăракан колхозра вăрлăхсене сортласа пĕтерчĕç, ялхуçалăх машинисем пурте хатĕр. Колхозра халь вырăнти удобренисене пухаççĕ. Колхозниксем агротехникăна вĕренме тытăнчĕç.

«Красный партизан» колхозри колхозниксем Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитме пулчĕç. Колхозниксем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç, бригадăсем çуракине ăмăртса хатĕрленеççĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Найденко майорăн летчик-истребителĕсем

Хула çинче пĕр виçеллĕн кĕрлекен хăвatлă мотор сасси илтĕнсе кайсан, Мускавра пурăнакан çынсенчен кам пуçне хăвăрт кăна çӳлелле çĕклесе пăхмасть пулĕ! Вĕсем пĕлĕт тӳпинчен ярăнса иртекен машинăсене куçпа ăсатса илеççĕ те пĕтĕм чĕререн хаваслансa: «Пирĕн хурчăкасем патрульре çӳреççĕ, маттур та иккен!» тесе пĕлтереççĕ. Совет истребителĕсен моторĕсем пĕр самантлăха та шăпланмаççĕ. Кашни кунах вĕсем боевой операцисене вĕçсе тухса каяççĕ, кашни кунах сывлăшра тăшманпа хаяррăн тытăçса çапăçаççĕ.

Майор Найденко командир пулса ертсе пыракан истребительнăй полк—вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах фронтра. Çак хушăра полк пĕр самант та «ĕççĕр ларни» пулман. (Хаяр çапăçусене кунта «ĕç» теççĕ). Çав хĕрӳллĕ ĕçе нимĕнрен ытларах çак факт лайăх кăтартса парать: полк составĕнче 27 орденоносец, Совет Союзĕн Геройĕсем иккĕ. Вĕсем, тăшмана хăюллăн пĕтерсе пыракан çак паттăрсем, пурте питĕ çамрăк. Пĕррехинче командный пункт вырнаçса тăракан землянкăна çынсем пуçтарăнчĕç. Кам миçе çула çитни çинчен калаçу пуçланса кайрĕ:

— Чăнах та, кам-ха пирĕн пуринчен аслăраххи?—ыйтрĕ пĕри.

— Эпĕ, — ответлерĕ полк командирĕ майор Найденко. Вăл кунта хăйĕн ĕçлĕ вырăнĕпе пуринчен асли çинчен мар, çулĕпе асли çинчен каласа парĕ. Майор 1915 çулта çуралнă. Вăл икĕ вăрçăра пулнă ĕнтĕ, халĕ виççĕмĕш вăрçăра çапăçать. Унăн кăкăрĕ çинче виçĕ орден—Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем. Вăл вуншар хăюллă операци туса иртернĕ. Хальхи вăрçă пуçланнă чух вăл эскадрилья командирĕ — капитан пулнă. Халĕ ĕнтĕ—полк командирĕ, майор. А хăй вăл пурĕ те 27 çулта кăна, çав вăхăтрах вăл пуринчен те аслăрах шутланать, мĕншĕн тесен Совет Союзĕн Геройĕ Рибный 24 çулта, Кривошеин 22 çулта, Совет Союзĕн Геройĕ Каменщиков — çирĕмре, Начушкин—çирĕмре. Çамрăклăхра—вăйпа чăтăмлăх, харсăрлăхпа паттăрлăх. Çамрăклăхăн çак паха енĕсем вăрçă обстановкинче ĕçе çирĕп пĕлнипе, çапăçу расчечĕсене пĕлсе тунипе, тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратнипе пуянланаççĕ. Полкăн историйĕнче унăн чапĕ çинчен каласа паракан страницăсем темĕн чухлех.

Ку ĕç çуркунне пулса иртнĕ. Найденко юлташ командир пулса ертсе пыракан* ултă истребитель задание пурнăçлама вĕçсе тухса кайнă. Н. хули тĕлĕнче çакă ултă истребитель тăшманăн 12 «Юнкерсĕпе» тата 9 «Мессершмитчĕпе» тĕл пулать. Вăйсем тан ман пулин те, пирĕн паттăр летчиксем тăшмана хирĕç çапăçăва ыткăнса кĕрсе каяççĕ. Истребительсем çаврăнса килеççĕ те тăшмана атакăлама тытăнаççĕ. Малтанхи хут пырса çапнипех Найденкăпа Рибный тăшманăн пĕрер самолетне вут хыптарса яраççĕ. Иккĕмĕш атака, виççĕмĕш. Ушкăнпа çапăçса пирĕн истребительсем тăшманăн тата виçĕ самолетне персе ӳкереççĕ. Кун хыççăн тăшман самолечĕсем пĕлĕтсем хушшине вĕçсе кĕрсе тараççĕ, пирĕн ултă истребитель, хур кайăксем пек карталанса, каллех хăйсен базине таврăнаççĕ.

... Разведка çакăн пек хыпар илсе килнĕ: тăшманăн пĕр аэродромĕ çинче 70 самолет тата горючисен пысăк запасĕ тăрать. Капитан Арсеньев, çичĕ истребитель пуçне тăрса, çавăнтах тăшман сăпсисен йăвине кайса аркатма задани илет. Çичĕ харсăр летчик, пулемечĕсене авăрласа, мĕн май пур таранах бомбăсем илеççĕ те сывлăша çĕкленсе хăпарса каяççĕ. Вĕсем кĕтмен-туман çĕртенех вăрман хыçĕнчен ыткăнса тухаççĕ те тăшман çине бомбăсем тăкма тытăнаççĕ.

— Малтанхи бомбăсем ӳкнĕ хыççăнах нимĕçсен паника пуçланса кайрĕ. Бомбăсем кĕрĕслетсе çурăлаççĕ, вут хыпса тухрĕ,—каласа парать капитан Арсеньев.—Нимĕçсем пире хирĕç вĕçсе тухма мар, хăйсене хăйсем пĕлмесĕр вĕткеленсе çӳреççĕ. Анчах пирĕн хамăрăн та ахалех çаврăнса каяс килмест, мĕншĕн тесен пулемет комплекчĕсенчен пĕр патрон та расходламан. Пирĕн çичĕ харсăр самолет тăшман аэродромĕ çийĕн икĕ хутчен çĕр çумĕпех вĕçсе иртсе мĕнпур чĕрĕ чунсене веçех пĕтерсе тăкрĕç. Хамăр базăна таврăнма тухсан, пĕр «Мессершмитт» çапах та сывлăша вĕçсе улăхнине асăрхарăмăр. Āна çавăнтах персе антартăмăр. Кайран пире разведка çапла пĕлтерчĕ: ку çапăçура тăшман хăйĕн аэродромĕ çинче 30 самолет çухатнă.

... Эскадрилья командирĕн заместителĕ Смирнов юлташ хăйĕн звенипе тăшман тылне разведкăна вĕçсе тухса кайнă. Разведчиксем часах тăшман колоннисем куçса пынине асăрханă. Колоннăра пехота, автомашинăсем, танксем, мотоциклсем шуса пынă. Звено хăйне тăшмана палăртмасăр базăна вĕçсе таврăннă та обстановка мĕнли çинчен каласа панă. Çавăнтах сывлăша пирĕн 6 штурмовик çĕкленнĕ, вĕсене малтанхи истребительсемех хураллаcа пынă. Вĕсем, разведка тунă чухнехи пекех, колонна вĕçне вăрттăн вĕçсе тухнă та тăшмана çиçĕм пек хăвăрт пырса çапнă. Тăшман çĕр çинчен пирĕн самолетсем çинелле пĕтĕмпе шăртланса кайса пеме пуçланă. Пирĕн истребительсем тăшманăн огневой точкисене аркатма тытăннă. Нимĕçсен вут-хĕмĕ кăштах тамалнă. Çав вăхăтпа усă курса, пирĕн штурмовиксем тăшмана темиçе хутчен те çинесинех пырса атакăланă.

Машинăсен материальнăй чăсне питех те тирпейлĕн тытса усрани, самолетсене юратса пăхса усрани, машина вăл — çапăçури чи шанчăклă тус, хăйне лайăх тытакана нихăçан та инкеке хăварас суккине çирĕп ĕненни—акă мĕнпе уйрăмăнах палăрса тăраççĕ Найденко юлташăн летчикĕсем. Çакна пула вĕсен самолечĕсемпе моторĕсем яланах пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Мотор ĕçлемен пирки задание пурнăçлама вĕçсе тухса каймасăр тăни полк историйĕнче те ку вăхăтчен пĕрре те пулман. Вăрçă пуçланнăранпа летчиксенчен кашниех çĕртен те ытларах боевой вĕçевсем тунă. Хальхи вăхăтра кунсем ытлашши çутах мар пулин те, самолетсем кашни кунах темиçешер хутчен вĕçсе тухса кайса çаврăнса килеççĕ. Шартлама сивĕ çанталăкра та самолетсен материальнăй чăсĕ çуллахи пекех пĕр чарăнмасăр ĕçлет. Кунта хăйсен паттăрла ĕçне пула çапăçури операцисене ăнăçлăн иртерме май панă юлташсем çинчен те каласа хăвармалла.

Кĕçĕн воентехник Луцов, 2-мĕш рангри техник Зайцев, старшинасем Дмитриевпа Карито юлташсем, вооружени техникĕ Киселев—çаксем пурте летчиксем пекех çамрăк çынсем. Вĕсем хăйсен машинисен уйрăмлăхĕсемпе «ăсĕ-хакăлĕсене» пĕтĕмпех вĕренсе çитнĕ. Командăнăй пунктри дежурнăй юлашки машина вĕçсе килни çинчен пĕлтерсен, летчиксем каçхи апат тăваççĕ те хăйсен землянкисене саланаççĕ. Часах гитара янрама тытăнать, хаваслă юрă, вăйă-ташă пуçланса каять. Çак вăхăтра техниксем вахтăна тăраççĕ. Моторсем епле ĕçленине вĕсем татах тепĕр хут итлесе пăхаççĕ, машинăсене тĕпĕ-йĕрĕпех тĕрĕслесе тухаççĕ. Пур машинăсем те йĕркеллех ĕçлеççĕ пулсан та, вĕсем лăпланса лармаççĕ, çĕрĕ-çĕрĕпех моторсене ăшăтса тăраççĕ,—кашни самантрах вĕçсе тухса кайма май пултăр!

Майор Найденко полкĕ тĕрлĕ фронтсенче çапăçнă. Тăшман самолечĕсене персе антарас ĕçе вĕсем 1941 çулта июль уйăхĕнчех пуçласа янă. Полк тăшмана пĕтерес ĕçе 1942 çулта татах та ăнăçлăраххăн туса пырать. Боевой вĕçевсен журналĕ çине юлашки эрне хушшинче кăна татах 6 çĕнтерӳ туни çинчен çырса хунă. Вăл çĕнтерӳсенчен виççĕшне Рибныйпа Каменщиков юлташсем тунă. Халĕ ĕнтĕ Рибный юлташăн активĕнче вăл хăй персе антарнă тăшман самолечĕсем 10, юлташĕсемпе пĕрле персе антарнă самолетсем 11 шутланаççĕ. Каменщиков юлташ хăй тĕллĕн тăшманăн 3 самолетне, юлташĕсемпе пĕрле — 12 самолет персе антарнă. Пĕтĕм полкĕпе илсен, майор Найденкăн харсăр летчикĕсем ку вăхăтчен тăшман самолечĕсене пĕтĕмпе 176 машина сывлăшра персе антарнă тата аэродромсем çинче пĕтерсе тăкнă. Пирĕн мĕнпурĕ те 13 самолет кăна пĕтнĕ. Çакăн пек ĕнтĕ полк фашистла вăрă-хурахсене хирĕç харсăррăн та паттăррăн çапăçнин итогĕсем.

Çапăçура пуçĕсене хунă юлташсен ячĕсене кунта пĕтĕм таса чĕререн асра тытса пурăнаççĕ. Нумаях пулмасть летчик Завьялов тăшмана хирĕç çапăçса пуçне хунă. Пирĕн мухтавлă чаçсем нимĕçсене Волоколамскран хăваласа кăларнă чухне тăшман снарячĕ Завьялов машинине персе амантнă та вăл хамăр территори çине вĕçсе çитеймесĕр нимĕçсен аллинчи çĕр çинех пырса ларнă. Анчах та вăл тăшмана чĕррĕн парăнман, юлташсем кайран ун тăнлавĕ çинче пуля шăтăкĕ тупнă. Завьялов юлташ тăшмана нихăçан та чĕррĕн парăнмастăп тесе пурăннă. Тăшман аллине лекес мар тесе вăл ку хутра хăйне-хăй пĕрĕнсе вилнĕ. Юлташĕсем ăна çар йĕркипе хисеп парса пытарнă. Унăн тупăкĕ умне тăрса, пурте хăйсен юлташĕн пурнăçĕшĕн тăшмана хаяррăн тавăрма тупа тунă. Вĕсем, çак харсăр совет истребителĕсем, тăшмана ăçта тĕл пулнă унта нимĕн каçарусăр хаяррăн тавăрса пыраççĕ.

В. БЕЛИКОВ.
(«Известия»).

Гитлеровецсем хăйсен вилĕмне туяççĕ

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Т. ялĕ патĕнче вĕлернĕ нимĕç офицерĕсенчен пĕрин çумĕнче тĕлĕнмелле документ тупнă. Ку документ вĕçленмен çыру е дневник валли çырса илнисем пулнă пулмалла. Çав документран нимĕçсене Тихвин патĕнче тата Волхов районĕнче аркатса тăкни салтаксемпе офицерсен шухăш-кăмăлне питĕ япăхлантарни курăнса тăрать. «Пире 126-мĕш дивизипе пĕрлештерме чакарни пирĕншĕн инкек çине синкек пулчĕ, — тесе çырать офицер. — 126-мĕш дивизие тĕппипех пĕтерсе тăкатпăр текен вырăс листовкисенче эпир малтан кулаттăмăр. Анчах та çав дивизипе пĕрлешнĕ хыççăн малтанхи кунсенчех эпир кулма пăрахрăмăр: батальон питĕ пысăк çухатусем тӳсет, 30 градус ытларах сивĕ çĕрте питĕ йывăр асап курать. Пирĕн батальонсене пĕрин хыççăн теприне çавăра-çавăра илеççĕ, вĕсене вара питĕ пысăк çухатусем туса çăлса кăларма тивет. Пире противник пыра-пыра çапни çумне тата тăм илнипе асапланакансене хушмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн ротăра паянхи кун тĕлне 1 офицер, 3 унтер-офицер тата 31 салтак шутланнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Пирĕн чакмалли çеç тăрса юлать. Пĕр-пĕр кун, вырăссем пире вăйлăн пырса хĕссен, фронтăн çак пайне хӳтĕлекенсем дикарьсен ушкăнĕ пекех тарма тытăнĕç. Дисциплинăна кунран кун тытса пырас тесе, офицерсемпе унтер-офицерсем хăйсем мĕн тума пултарнисене пурне те тăваççĕ, анчах та çынсем ывăннипе çавтери халран кайнă. Çак районра мĕншĕн-ха çавăн чухлĕ çынна вĕлерсе, аманнтса стройран кăлармалла пулнă? Пирĕн кунта мĕн-мĕн тӳсме тивнине тăван çĕршывра пĕлеççĕ-ши?»

Çапла ĕнтĕ, гитлерла çарăн салтакĕсем çеç мар, офицерĕсем те Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапнине пула хăйсен кунçулĕ мĕнле пулассине ăнланса пыраççĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем умĕнче хăйсен тĕксĕм вилĕмĕ уçăмлăрах та уçăмлăрах палăрса пырать.

Флангран пырса çапни

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен пĕр 100 çынран тăракан подразделенийĕ контратака туса лейтенант Яковлев хӳтĕлекен позици çине кĕрсе кайма хăтланнă. Контратака вăхăтĕнче нимĕçсем хăйсен подразделенине пулăшас тесе, пулеметсенчен, минометсенчен пит те вăйлă персе тăнă, пирĕн подразделенин боевой йĕркине салатса ярасшăн пулнă. Яковлев лейтенант хăйĕн боецĕсенчен чи хăюллă 10 паттăра суйласа илнĕ те противникăн флангне кайса тухнă. Кĕтмен çĕртен вăйлăн персе тапăнса, вăл противникăн миномет батарейипе пулеметне стройран кăларать. Фашистсем çапла флангран пырса çапнине чăтма пултарайман, хăраса ӳкнĕ те, хăйсен хĕçпăшалне, аманнă салтакĕсене пăрахсах, каялла чакнă. Пирĕн боецсен аллине нумай трофейăсем тăрса юлнă.

А. ВИКТОРОВ.

Германи командованийĕ çĕнĕ тискерлĕхсем тума хушать

КАНТАР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 8-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсем пĕр тискер ĕç хыççăн татах та тепĕр ĕç туса пыраççĕ. Нимĕçсем чакнă чухне фронт çывăхĕнчи ялсенчен пур арçынсене те инçетри тыла хăваласа илсе кайнă. Анчах та кун пек туни те вĕсене хăрушлăха пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассăн туйăнман пулас, çавăнпа та нимĕçсен командованийĕ вăрттăн приказ панă. Нимĕçсен 9-мĕш танковăй дивизине 1942 çулти январĕн 21-мĕшĕнче 100-мĕш №-пе панă приказра çапла каланă:

«Верховнăй командованин 1941 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнчи 2974/41-мĕш №-лĕ вăрттăн приказĕ тăрăх, оккупациленĕ халăх пурăнакан пунктсенчи çар службине тивĕçлĕ пур арçынсене те çар çыннисене хупса усрамалли лагерьсене ăсатмалла».

9-мĕш танковăй дивизие панă çак приказрах Курск хулинче ерекен чирсем сарăлни çинчен каласа панă. Çак приказăн 5-мĕш пунктĕнче кун пирки çакăн пек кăтарту панă: «Курск хулинче ерекен чирсем сарăлнă пирки, Грузински урамри 65-мĕшпе 67-мĕш №-лĕ çуртсене, Золотаревски урамри 19-мĕш №-лĕ çурта çӳреме чарас».

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР, февралĕн 8-мĕш. (ТАСС). Пирĕн командовани аллине, нимĕçсен штабĕн ытти докуменчĕсемпе пĕрле, нимĕçсен 260-мĕш пехотнăй дивизи валли «Граждăнла халăха тата противникăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене мĕнле тыткаласси çинчен» кăларнă вăрттăн инструкци лекнĕ:

«Тивĕçлĕ хаярлăх пурри халĕ те пур çĕрте те палăрмасть-ха, — тенĕ çав инструкцире. — Нимĕç салтакĕсен пурин те кашни уйрăм тĕслĕхрех, пур мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ чухне те, противникăн граждăнла халăхĕсене май килнĕ таранах хытă тытса пымалла». Инструкци командирсем умне çапла ответлăх лартать: татăклăн та хĕрхенӳсĕр çĕр» пулмалла, халăхăн мĕнпур массисене вăйпах пăхăнтарса пымалла. «Вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисене мĕн чухлĕ те пулин шеллени е вĕсене кăшт та пулин шанни, —тесе вĕрентет командовани хăйĕн пуçкасаканĕсене, — нимĕç салтакĕсене тивĕçлĕ мар», командовани, малтан асăрхаттарса кăшт-кăрмасăрах хĕçпăшалпа усă курма сĕнет. Германи салтакĕсемпе офицерĕсем çав тискер кайăкла инструкцие, мирлĕ халăхпа тыткăна лекнĕ красноармеецсене татах та хытăрах асаплантарма чĕнекенскерне, пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыраççĕ.

Пирĕн войскăсем ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенчи çынсем каласа панă тăрăх, вăрçăра хăйсен ĕçĕсем ăнăçсăр пулса пыма пуçланăранпа гитлеровецсем хăйсен хаярлăхне татах та вăйлатнă.

Çапăçури ăмăрту сарăлсах пырать

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Калинин фронтĕнчи пехотинецсем, летчиксем, танкистсем, артиллеристсем хушшинче Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа анлăн сарăлса пыракан социализмлă ăмăрту пирĕн боецсене тăшмана вăйлăнрах та вăйлăнрах çапа-çапа аркатма хавхалантарать.

Н-ски соединени кăна виçĕ кун хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, пин те çичçĕр фашиста яхăн пĕтерсе тăкнă. Пĕр подразделенири артиллеристсем, хăйсен орудийĕсенчен тĕл персе тăнипе, тăшманăн 13 станковăй пулеметне, икĕ ДЗОТ-не тата пехотăн пĕр взводне яхăн пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем, тăшманăн огневой точкисене пĕтерсе тăкса, хамăр пехотинецсене боевой задачăна ăнăçлăн пурнăçлама май панă.

Рыбаков юлташ военком пулса тăракан подразделенири пулеметчиксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. П. ялĕ çине наступлени туса пынă чухне пулеметчиксем стрелоксенчен нимĕн чухлĕ те кая юлмасăр малалла куçса пынă, вĕсене хăйсен хăватлă вут-хĕмĕпе хӳтĕлесе, тăшмана хытăрах хĕсме май панă. Пирĕн чаçсем тăшман оборонине çапса çĕмĕрсенех, яла аслă сержант Бирюк юлташăн пулеметнăй расчечĕ çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Кун умĕн нумаях та пулмасть пулеметнăй взводăн командирĕ аманнă пулнă. Бирюк юлташ, взвода ертсе пырассине хăй çине илсе, нимĕçсен 6 контратакине сирсе янă. Çак кун Бирюк юлташăн взвочĕ гитлеровецсен пĕр взводне ытла пĕтерсе тăкнă, 5 фашиста тыткăна илнĕ. Çак çапăçура пулеметчик Хохлов калама çук пысăк хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Виçĕ хутчен аманнă пулин те, вăл хăйĕн боевой постне пăрахса кайман, тăшман çине вут-хĕм сапса тăнă.

Ирĕке кăларнă ялсенчи халăхсем хăйсене ирĕке кăларакансене — Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ. Вĕсем фашистсен тискер ĕçĕсем çинчен йĕре-йĕре каласа параççĕ. Большой Остров ятлă ял çыннисем çапла каласа пачĕç: декабрĕн 14-мĕшĕнче нимĕçсем ялти çынсене пурне те пĕр вырăна хăваласа пухрĕç те командовани приказне вуласа пачĕç. Приказра çапла çырнă: «Партизансем нимĕçсен продовольстви тиенĕ тăватă автомашинине пĕтерсе тăкнăшăн 25 километр хушшинчи таврари ялсене пĕтĕмĕшпех вут тĕртсе çунтармалла, арçынсене 15 çултан пуçласа 50 çула çиличчен пурне те вĕлерсе тухмалла».

Нимĕçсем çапла турĕç те. Вĕсем 11 яла пĕтĕмпех çунтарса ячĕç, арçынсемпе çамрăк ачасене çĕр çынна яхăн тискеррĕн асаплантарса вĕлерчĕç. 16 çулти çамрăка Вася Григорьева фашистсем 27 вырăнтан персе суранланă. Анчах та ку тискерлĕхсем совет граждăнĕсен çирĕплĕхне хуçма пултарайман; вĕсем совет халăхĕ тăшмана çĕнтерессине шансах тăнă. Пĕр ватă колхозник Иванов, хăйне нимĕçсем çакса вĕлерме илсе кайнă чухне, пуçне мăнаçлăн çĕклесе, çапла каланă:

— Эпĕ хам тăван çĕршывшăн вилетĕп. Совет халăхĕ ылханлă фашистсене пуриншĕн те тавăрĕ!

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Амăшĕ

Можайскран хĕвеланăç енчи Уварово хулинче 1941 çулти ноябрь уйăхĕн сивĕ кунĕсенче нимĕçсем хĕрарăм-партизанкăна Александра Мартыновна Дрейманна тата унăн тин çеç çуралнă ывăлне асаплантарса вĕлернĕ.

Уварово хулин площадĕнче, шкул умĕнче тăшманăн танкĕсем тăнă вăхăтра, нимĕçсен автомобилĕсем Бородинопа Можайск патнелле васканă вăхăтра, çăмăрлă та çиллĕ каçхине вăл вăрманалла, партизансен отрядне кайнă. Çав вăхăт ĕнтĕ нимĕçсем Мускав çине наступлени туса пынă хăрушă вăхăт пулнă.

Халĕ ĕнтĕ Александра Мартыновнăна партизансен отрядне пыма чĕнкипе чĕнменнине никам та астăваймасть. Ана, ваткăллă тужурка, пысăк атă тăхăннă тата тĕксĕм тутăр çыхнă çак çамрăках мар хĕрарăма пурте çырма тепĕр енче, палатка патĕнче курнă. Вăл, вуншар çул хушши татти-сыпписĕр ĕçе хăнăхнăскер, отряд командирĕнчен çийĕнчех мĕн тумалла тесе ыйтнă. Отряд командирĕ йăл кулнă та: — Эсĕ пирĕн хуçа-арăм пул,—тесе ответ панă.

Александра Мартыновна тужурка çаннине таврнă, чулсем урлă шăнкăртатса юхакан çырмаран пĕр хуран шыв тултарса килнĕ те, çак самантран пуçласа вара яланхи пурнăçăн йĕркине кĕрсе кайнă: землянкăра вучах тĕлĕнче разведкăран таврăннă партизансен аттисене типĕтнĕ, повăра апат пĕçерме пулăшнă, хĕçпăшал тасатнă, палаткăна пухса йĕркеленĕ. Александра Мартыновна кăнтăрла та, çĕрле те ĕçленĕ, отрядра пурте уншăн тăван, çывăх çынсем пулса çитнĕ. Вăрманта хăйĕнчен чылай аслăрах çынсем пурăннă пулин те, вăл вĕсене шӳт туса «манăн ачамсем» тесе чĕннĕ. Партизансем ăна чи ăшă сăмахпа «анне» тесе чĕннĕ.

Отряд икĕ эрне хушши кĕрешнĕ ĕнтĕ. Юр çунă. Хытса ларнă, тумхахлă çĕр шикĕсленнĕ. Вăрманта кайăк-кĕшĕк шавĕ лăпланнă. Анчах та пăшал сассисем те, пулемет сассисем те чарăнман. Вăл сасăсем, шетĕрнеке патакпа шакăртаттарнă пек, уçăмлах мар илтĕннĕ. Партизансем шинельсем, каскăсем, патронсем илсе пынă. Партизансем обоз çине тапăннă, фашистсен ялсем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрекен карателĕсене пĕтере-пĕтере тăкнă. Отряд комиссарĕ Павел Фомин çынсене пысăк операци тума хатĕрленĕ.

Тăшман Мускав çине çĕнĕ наступлени тумашкăн танковăй дивизисем пухса тăратнă.

Фомин магистраль çинчи кĕпере сирпĕнтерсе ярса нимĕç колоннисем куçса çӳрессине чарса лартма шут тытнă. Вăрманти пур çулсемпе сукмаксене те лайăх пĕлекен опытлă разведчик кирлĕ пулнă. Кĕпер патне минăсене просексем тăрăх мар, чăтлăх витĕр илсе тухмалла пулнă. Вара Александра Мартыновна хăйне похода яма ыйтнă: Уварово таврашĕнчи вăрмансене вăл, хăйĕн тăван килне, хăй ӳснĕ Поречье ялне пĕлнĕ пекех, лайăх пĕлет вĕт. Çак вăрмансенче вăл помещика валли кăмпа е çырла пухса, корзина тума хулă касса сахал мар çӳренĕ. Кунта, Уварово çывăхĕнче, Александра Мартыновна хăйĕн амăшĕпе пĕрле помещик патĕнче батракра ĕçленĕ, унтан революци хыççăн ялти шкулта вĕрентнĕ; юлашки вăхăтра Ерышово ялсовечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ. Уварово таврашĕнчи вăрмансенчи мĕнпур сукмаксемпе вăрттăн çулсене мĕнле пĕлес мар-ха унăн?

Çĕрле, магистраль çинчи кĕпер çине танксем тата пехота тиенĕ автомобильсем пырса кĕрсен, кĕпере сирпĕнтерсе янă. Ир енĕпе партизансем ывăнса, выçса, шавласа вăрмана таврăннă. Пĕр Александра Мартыновна çеç, землянка кĕтессине тăлăп айне кĕрсе выртнă та шуралса кайнăскер, шухăшлăскер, кун каçах сивĕпе чĕтресе выртнă. Отряд комиссарĕ Павел Фомин ун патне икĕ хутчен пынă, анчах вăл тăлăппа лайăхрах пĕркеннĕ те çывăрансăр пулса выртнă. Ирхине вăл тăнă, шыв ăшăтнă, палаткăна пухса тирпейленĕ, ваткăллă тужуркине тăхăннă та партизансемпе сывпуллашнă: «Юлма пултараймастăп, — тенĕ вăл Фомина. — Манăн вăй çук, эпĕ сирĕншĕн чăрмав пулас теместĕп. Чун тăвăлса çитет те, анчах çапах та каятăп».

Вăл мĕншĕн пăрахса кайнин чăн-чăн сăлтавĕсене никам та пĕлмен; каçхине çеç повар пурне те Александра Мартыновна çăмăлланма хатĕрленни çинчен каласа панă. Александра Мартыновна хăй йывăр çыннине асăрхаса, хăйĕн çинчен тем шухăшлама пуçлассинчен именсе, яланах тăлăп тăхăнса çӳренĕ. Разведкăра чухне вăл виçĕ хутчен ларса канлă, партизансем ăна кĕтсе тăнă. Отрядра халĕ ачасемпе аппаланса çӳремелли вăхăт-и вара?

Повар калаçма чарăннă. Взрывсен шавĕ уй-хирсенче, фронтсенче, вăрмансенче халь пулса пыракан хаяр çапăçусем çинчен аса илтернĕ, анчах та çак çапăçу хĕрарăмăн пурнăçĕнчи яланхи асаплă тапхăра, çĕнĕ çын çуратас тапхăра, хупласа лартайман.

Черетлĕ разведкăна Уварово хулинче Александра Мартыновнăна шыраса тупма, ăна пулăшу пама, тăшмансенчен хӳтĕлесе хăварма наказ парса янă. Анчах та тупма май килмен. Тепĕр эрнерен Александра Мартыновнăна çыхса пăрахса комендатурăна, шкулăн пысăк чул çуртне илсе пынине пĕлнĕ. Çакăнтанпа ĕнтĕ отрядăн ун çинчен нимĕн те пĕлме май килмен. Александра Мартыновна çухалнă. Вуннăмĕш кунне çеç платник Ефим Цыганов, партизанăн ашшĕ, тул çутăлас умĕн икĕ нимĕç салтакĕ такамăн юнланса пĕтнĕ виллине юр тăрăх сĕтĕрсе пынине курнă. Çак вилле кӳлĕри вакка пăрахнă чухне Цыганов Александра Мартыновна Дрейманна палласа илнĕ. Вăл нимĕçсем патне мĕнле лекнине, мĕнле асапа тӳссе иртернине, унăн тин çеç çуралнă ывăлне мĕн пулнине Уваровăра никам та нимĕн те пĕлмен. Халĕ çеç ăна çынсем — Анна Минеева, Анна Гуслякова, Евдокия Каленова, Ефим Цыганов каласа панисем тăрăх тата типографи картишĕнчи сарайра унпа пĕрле ларнисем, вилĕмрен çăлăнса юлнăскерсем, каласа панисем тăрăх, юлашкинчен тата Уварово хулинчи нимĕç комендантчĕн тăлмачне, Ильинские, пирĕн войскăсем тытнăскере, допрос туни тăрăх, хĕрарăм-партизанкăн вилес умĕнхи асаплă çулне тĕпчесе пĕлме май килчĕ.

Вăл хулана çĕрле пырса кĕнĕ те врач пурăнакан çурта вырнаçнă. Врач ăна урамаан тух тесе, выртма канаш панă. Уварово хулинче нимĕçсем çынсене вĕлернĕ, асаплантарнă: çуратас умĕн пăлханни сиенлĕ, — тенĕ врач. Александра Мартыновна хăйне отрядран парса янă консервăпа колбаса запасне хисеплесе пăхнă. Вăл виçĕ кун выртнă. Тăваттăмĕш кунне алăка такам пырса шакканă. Александра Мартыновна чӳречерен пăхнă: пӳрт умĕнче нимĕç салтакĕсем çур ункă евĕрлĕ вырнаçса тухнă. Вăл ăшă тутăр пĕркеннĕ те алăк уçнă. Пĕчĕк те самăр нимĕç çĕмĕрсе кĕрсе ăна çапса янă. Вăл сулланса кайнă, анчах та ăна икĕ салтак ярса тытнă, унăн аллисене çыхса ăна типографи картишĕнчи пĕчĕк чул сарай патне илсе кайнă. Унта паллакан çынсем нумай пулнă; вĕсем пĕр-пĕрин çумне таччăн çыпçăнса тăнă. Ларма ирĕк паман, тата çакăн пек тăвăр çĕрте ларма та май килмен. Александра Мартыновна стена çумне куçса тăнă. Çурăм хыçне туртса çыхнă аллисем юнпа тулса çывăрса ларнă, анчах вăл нимĕн те шарламан. Çĕрле ăна допроса чĕнсе кайнă. Салтак ăна Уварово хулинчи нимĕç комендантчĕ Хаазе капитан патне илсе кайнă. Допросра тăлмачă Ильинский пулнă. «Ларăр», тенĕ Хаазе. Александра Мартынова сĕтел патнерех куçса тăнă та лăпкăн каланă: «Мана çуратма ирĕк парăр, çӳремелли манăн виçĕ кун кăна юлчĕ. Вара вĕлерме те пултаратăр», тенĕ. Хаазе ун çине пăхса илнĕ, ахăлтатса кулса янă, салтаксене Александра Мартыновнăна салтăнтарма хушнă. Александра Мартыновна хирĕç тăма хăтланса пăхнă, анчах тахшин ăна таканланă йывăр атăпа тапнă, та, вăл вара тĕршĕнсе аннă. Александра Мартыновнăна çĕклесе тăратнă, анчах ларма ирĕк паман. «Хăвăрăн ачăр ячĕпе партизансен отрячĕ ăçтине каласа парăр пире. Эсир унтан килнине эпир пĕлетпĕр», тенĕ Хаазе. Вăл пĕр самант хушши нимĕн те чĕнмен, унтан: «Эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, нимĕн те каламастăп. Эсир мана хуçма пултаратăр; мана вилме тӳр килнĕ пуль. Анчах отряд çинчен эпĕ сире, темĕн пек асаплантарсан та, нимĕн те каламастăп», тесе ответ панă. Хаазе унран: «Эсĕ коммунистка-и?» тесе ыйтнă. Александра Мартыновна пуçне сулланă та: «Анлану тĕлĕшĕнчен эпĕ çитĕнсе çитеймен-ха», тенĕ. Унтан комендант ăна хула урамĕсем тăрăх утса тухса унăн паллакан çыннисем ăçта-ăçта пурăннине кăтартса тухма хушнă. «Эсĕ çара уран, пĕр платье вĕççĕн çеç каятăн. Анчах эсĕ мĕн чухлĕ ытларах çуртсем кăтартатăн, çавăн чухлĕ ытларах кĕрсе ăшăнма пултаратăн», тенĕ ăна Хаазе.

Икĕ салтак ăна çĕрлехи хулан урамĕсем тăрăх ертсе пынă. Витĕр касакан çил унăн ӳт-пӳне çунтарнă, вăл тутăрпа пĕркеннĕ, анчах та, сапаланса пĕтнĕ çутă тĕслĕ çӳçне тĕвĕлесе çыхса, нимĕн чĕнмесĕр утса пынă. Унăн çара, тăртаннă урисем такăрлатнă юр çине пусса пынă. Вăл ир еннепе каялла таврăннă. Салтаксем коменданта: хĕрарăм хăйĕн паллакан çыннисем пурăнакан пĕр çурта та кăтартса памарĕ, тесе каласа панă. Ăна каялла сарайне илсе пынă та унран пурте тĕлĕнсе кайнă. Унăн пĕр сăн-сăпачех пурне те чĕтреве ертнĕ. Вăл кăвакарса кайнă пулнă. Сывхарса килекен кун çутинче, çак çурма тĕттĕм сарайĕнче те, унăн пит-куçĕ вăтăлса кайнине, мĕскĕнленнине уйăрса илме май пулнă. Вăл такăшĕ сарса панă пальто çине выртма хăтланса пăхнă, анчах та çав тăлмачăпа пĕрлех пынă нимĕç салтакĕ сарайĕнчен пурне те илсе тухса кайнă та Александра Мартыновнăна пĕр пĕччен тăратса хăварнă. Ăна выртма ирĕк паман: унăн вĕçĕмсĕрех ура çинче тăмалла пулнă. Вăл, çурма çарамасскер, сарайĕнче пĕр пĕччен шывсăр, апатсăр виçĕ кун хушши ларнă. Унăн шухăшĕсене те, асапне те никам та пĕлмен. Пĕр хутчен çеç ун патне Евдокия Каленова колхозница вăрттăн çăкăрпа яшка илсе пынă. Вăл сарайĕн стенине шакканă та йынăшнă сасса илтнĕ. Вăл макăрса янă. Каленовăна нимĕçсем тытнă, çăкăрĕпе яшкине туртса илсе, хăйне хĕнесе пăрахнă. Çакăн хыççăн Александра Мартыновнăна татах комендант патне илсе пынă. Вăл халĕ ĕнтĕ выçăхса халран кайнипе тата ыратнипе утса çӳреме те пултарайман. Шăннипе унăн кĕлетки шыçăнса кайнă. Хаазе татах: «Партизансен отрячĕ ăçта? Кĕпере эсир сирпĕнтерсе ятăр-и?» тесе ыйтнă. Александра Мартынова комендант çине нумайччен, хăйĕнчен мĕн ыйтса пĕлме шутлани çинчен тавçăрасшăн пек тăрăшса, пăхса тăнă. «Пуриншĕн те эпĕ айăплă», тенĕ унтан. Вăл урăх нимĕн те каламан, тăнсăр пулса ӳкнĕ. Комендатура çуммипе иртсе пыракан Анна Гуслякова такам кăшкăрнине илтнĕ. Чӳрече патне пырса пăхсан, вăл урайĕнче выртакан Александра Мартыновнăна икĕ салтак шомполпа хĕненине курнă. Çав каçах вăл ача çуратма тытăннă. Ăна сарайне илсе кайнă та сивĕ урайне пăрахнă. Типографи картишĕ çывăхĕнчи çуртсенче пурăнакан çынсем çĕр каçах хĕрарăм йынăшнине илтнĕ. Çакă вăл Александра Мартыновна йынăшнине пурте пĕлнĕ, анчах та ун патне пулăшу пама никам та пыма хăяйман, мĕншĕн тесен типографи картишĕ патне пыракана нимĕçсем вĕлерессипе хăратнă. Александра Мартыновна, выçăскер, хĕнениπе, асаплантарнипе халран кайнăскер, хăйĕн хурлăхлă та асаплă самантне пурăнса иртернĕ, хăй ăшĕнче çĕнĕ çынна пурнăç парса тăнă, таçтан, хăйĕн чунĕн тĕпĕнчен вăй тупса, пурнăçне малалла тăснă.

Вăл ывăл ача çуратнă, ăна сарай хушăкĕнчен вĕрсе кӳртнĕ юрпа çуса тасатнă та тăнне çухатнă. Вăл комендатурăра тăна кĕнĕ. Ăна темĕнле вараланчăк халат тăхăнтарса янă. «Отряд

Юлашки 4-мĕш страницăра

Хěрлě Çар 24 çул тултарнине пысăк çитěнусемпе кĕтсе илер!

Хастарлăх ӳсет

ЕЛЧĔК. Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем чĕнсе каланине Елчĕк районĕнчи çамрăксем пысăк хавасланăхпа кĕтсе илчĕç. Автозавод çамрăкĕсен çырăвне сӳтсе-явнă май, районри çамрăксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна ĕçри пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме обязательствăсем илеççĕ. Комсомолăн Кушкăри «КИМ» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацийĕнчи комсомолецсемпе (организацин секретарĕ Е. Зайцева) колхозри çамрăксем февралĕн 10-мĕш тĕлне пур вăрлăхсене те сортласа хума, комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 40 центнер кĕл пухса хатĕрлеме, Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине йăлтах хатĕрленсе çитме обязательство илнĕ.

Сăрьелĕнчи «Марс» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем февралĕн 15-мĕш тĕлне ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсаса çитерме, вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа тасатма, февралĕн 15-мĕш тĕлне кооператив урлă государствăна сутнă тырра леçсе пама, комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 280 гектар çинче юр тытма, хире 300 лав тислĕк кăларма, 40 центнер кĕл пухма обязательство илнĕ.

Кивĕ Эйпеçри «Красный партизан» колхозри комсомолецсемпе (комсорг К. Ильина) çамрăксем февралĕн 15-мĕш тĕлне ялхуçалăх машинисене юсаса çитерме, çамрăксен вăйĕпе 25 центнер кĕл пухма, хире 250 лав тислĕк кăларма обязательство илнĕ.

Шкулсенче вĕренекен çамрăксем те автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвĕсене ырлаççĕ. Вĕсем автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен çырăвне сӳтсе-явнă хыççăн вĕренӳ пахалăхне тата дисциплинăна хăпартма, колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшма, профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне активлăн хутшăнма сăмах панă. Кавалти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле колхозсене 40 центнер кĕл пухса пама, 2 центнер вăрлăхлăх çĕрулми пуçĕ касса хатĕрлеме тата вĕренӳ пахалăхне хăпартма пулнă. Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне активлăн хутшăнса ГТО хĕллехи нормисене пама йышăннă. Кунти 3-мĕш класра вĕренекенсем (учитель Д. Авксентьев, вăлах комсомол комитечĕн секретарĕ) колхоза 4 центнер кĕл, 4 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 50 килограмм вăрлăхлăх çĕрулми пуçĕ касса хатĕрлеме йышăннă.

Районри ытти шкулсенче вĕренекенсем, колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем те Хĕрлĕ Çар кунне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

И. ПЕТРОВ.

Стахановецсен производствăри çитĕнĕвĕсем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Древкомбинатри стахановецсемпе стахановкăсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна паллă çутĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Хăма çуракан цехри Фекла Степанова бригади февралĕн 5-мĕшĕнче плана 211 процент, Ксения Данилова бригади—170 процент тултарчĕç.

Çамрăк стахановец Дмитрий Сурков накладчиксен бригадине ертсе пырать. Бригадăра 10 çын, пурте вĕсем нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Бригада уйрăмăнах февраль уйăхĕнче паха тĕслĕхсем кăтартать; февралĕн 4-мĕшĕнче вăл плана 125 процент тултарнă пулсан, 5-мĕш числара 168 процент, 6-мĕшĕнче татах та ытларах тултарнă. Бригада членĕсем Хĕрлĕ Çар кунне пурте двухсотниксем пулнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Типĕтмелли цехра Боленина тата Утехина юлташсем ертсе пыракан çамрăксен бригадисем малта пыраççĕ. Январь уйăхĕнче, вăтамран илсен, вĕсем кулленхи заданисене 150—170 процент тултарса ĕçленĕ, халĕ акă икшер хут ирттерсе тултараççĕ.

Вăрман хатĕрлес плана вăхăтра тултармалла

ÇĔРПУ. Хулари учрежденисемпе предприятисем тата ĕççыннисем валли вутă касса турттарас тĕлĕшпе леспромхоз ĕçлет. Ĕççынни депутачĕсен район Совечĕн исполкомĕ хула валли вутă касса турттарма вăрман çывăхĕнчи колхозсене хушнă.

План тăрăх 1-мĕш кварталта вутă касса турттарма çирĕплетсе панă колхозсенчен 15—20-шер çын çуран тата 10—15-шер çын лашапа ĕçлемелле. Паянхи куна леспромхоз çумне çирĕплетсе панă колхозсенчен палăртнă çынсем пĕри те ĕçе тухмаççĕ, «6-ое августа», «Дружба», «Красный флот», «Комбайн», «1-ое мая» т. ыт. колхозсенчен те 7—8 çын çеç ĕçлеççĕ.

Вутă касса турттарма çирĕплетнĕ колхозсем ĕçе йĕркеллĕ хутшăнман пирки леспромхозăн хулари складне вутă сахал килет. Тепĕр чухне пĕтĕмпе те 15—20 кубометр çеç турттарса килеççĕ. Çапла вара леспромхоза вутă илме пынă çынсен час-часах вутăсăр тухса кайма тивет.

Хула валли вутă касса турттарас ĕçе вăйлатасси çинчен райсовет исполкомĕн ларăвĕнче темиçе хутчен те сӳтсе-явса решенисем йышăннă. Анчах та йышăннă решенисем хут çинче çеç тăрса юлаççĕ. Решенисене никам та вĕçне çитерессишĕн тăрăшмасть.

Хула валли вутă касса турттарас плана вăхăтра тултармалла.

Г. ПЕТРОВ.

Çĕршыва укçа-тенкĕ ытларах парар

СЕНТЕРВĂРРИ. Юртукасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ колхозниксем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне лайăх туса пырать. Çавăнпа та самообложени тӳлеме извещени панă хыççăнах чылай колхозниксем укçине те тӳлеме тытăнчĕç. Сăмахран, Н. Ештаков, К. Анчунов тата ытти юлташсем те самообложени укçине çийĕнчех тӳлесе татрĕç.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

Хĕрлĕ Çар валли тивĕçлĕ резерв хатĕрлеççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Вагонсем юсакан заводра, фронта кирлĕ продукци туса кăларнипе пĕрлех, Хĕрлĕ Çар валли тивĕçлĕ резерв та хатĕрлеççĕ. Иртнĕ çулти октябрьте пĕрремĕш черетпе пухăннă всевобуч боецĕсем 110 сехетлĕ программа тăрăх çар ĕçне ăнăçлăн вĕренсе тухрĕç. Вĕсем нимĕç пусмăрçисене хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçма пултаракан стрелоксем пулчĕç. Ноябрĕн 15-мĕшĕнчен вара çар ĕçне 2-мĕш черетпе пухăннисем вĕренме тытăнчĕç. Занятисем производствăран уйăрăлмасăр çирĕп расписани тăрăх пулса пыраççĕ. Ку таранччен кашни отделенирех уставсене, винтовкăн пайĕсене, химиллĕ тапăнуран сыхланма тата окопсем чавма, маскировка тума вĕренсе çитнĕ. Халĕ боецсем пулемет пайĕсене тата унпа усă курма вĕренеççĕ. Уйрăмăнах вĕренӳре Круговой, Житкевич, Будаев, Танько, Подвиженко, Ладанюк, Березенцев, Тесленко боецсем пысăк пултарулăх кăтартаççĕ. Вĕсем çар ĕçне отлично пĕлеççĕ çеç мар, хăйсен пĕлĕвĕсене практикăпа таччăн çыхăнтарма, тактикăллă ыйтусене тĕрĕс татса пама пултараççĕ.

Çар ĕçне тĕплĕн вĕренсе алла илме подразделенисенче материальнăй база пурри чылай пулăшать. Боецсем хăйсемех танк, винтовка, граната макечĕсене туса хатĕрленĕ.

Всевобучăн иккĕмĕш черетри боецĕсене командирсем те лайăхрах вĕрентеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем халĕ 1-мĕш черетре пулнă çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтерсе, тӳрлетсе пыраççĕ, занятисене интереслăрах ирттереççĕ, дисциплинăна çирĕпрех тытаççĕ. Подразделени командирĕ Супперфин, комиссарĕ Ковалев юлташсем каланă тăрăх, уйрăм командирсенчен Лаврентьевпа Стальнов юлташсем уйрăмăнах лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсен подразделенийĕсенче вĕренӳре юлса пыракан, занятисене сăлтавсăр сиктерекен, дисциплинăна пăсакан боецсем çук. Пурте хăйсен обязанноçĕсене чыслăн пурнăçланине, лайăх тата отлично вĕренме тăрăшнине палăртаççĕ.

Подразделенире çар ĕçне тăрăшса вĕреннипе пĕрлех политикăллă ĕç çине те тивĕçлипе çаврăнса пăхаççĕ. Политруксем кашни занятти пуçланмассеренех фронтри лару-тăру çинчен политинформацисем ирттереççĕ, Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен каласа параççĕ. Боецсен политикăллă активлăхне ӳстерме отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тĕлпулусем туса ирттерни те нумай пулăшать. Фронтра пулнă красноармеецсем нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсен тискерлĕхĕсем çинчен, пирĕн чаçсен паттăрла çапăçăвĕсем çинчен каласа параççĕ. Çĕнĕ çултан пуçласа çавăн пек тĕлпулусем виçĕ хут туса ирттернĕ.

Анчах хальхи вăхăтра вĕренӳ пунктĕнче хăшпĕр çитменлĕхсем те пур-ха. Нумаях пулмасть кунта ЧАССР çарĕç комиссарĕпе СССР Оборона Халăх Комиссариатĕнчи всевобуч инспекторĕ пулчĕç. Вĕсем палăртнă тăрăх, вĕренӳ пункчĕн тĕп çитменлĕхĕ вăл—вăрçăра мĕн кирлĕ—çавна, вăрçăра мĕнле тăваççĕ— çапла вĕрентменни пулса тăрать. Сăмахран, строевой занятисене сивĕ кунсенче йывăçсем типĕтмелли пӳлĕмре тата хĕрлĕ кĕтесре ирттерме пăхнă. Паллах, кун пек ирттернĕ занятисен усси сахал пулма пултарнă.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарни çывхарса килет. Çак чаплă куна çар ĕçне вĕренекен боецсем тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Хĕрлĕ Çар уявĕ ячĕпе вĕренӳре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн халĕ подразделенипе подразделени, боецпа боец социализмлă ăмăртăва тухнă. Унпа пĕрлех вĕренӳ пунктĕнче всевобуч боецĕсен пĕтĕм Союзри ăмăртăвне хатĕрленес ĕç те вăйлăн пырать.

Т. ИВАНОВ.



ФРОНТА ХĔÇПĂШАЛ ТАТА БОЕПРИПАССЕМ ЫТЛАРАХ ПАРАР!
Ӳкерчĕк çинче: Мускаври Н-ски заводăн сборочнăй цехĕнчи контролер Т. П. Красильщикова юлташ ещĕке тултарма хатĕрленĕ противотанковăй гранатăсене тĕрĕслет.
О. ИГНАТОВИЧ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçре

КАЛИНИНО. Комсомолăн Чăрăш Шĕнерти «Красноармеец» колхозри пуçламĕш организацийĕнчи комсомолецсемпе комсомолкăсем, хăйсем çине обязательствăсем илсе, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе активлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Комсомолка А. Данилова юлташ, комсомолецсен пухăвĕ хушнă тăрăх, тырă сортлакан звено организациленĕ, вăл унта 4 хĕрачана явăçтарнă. Звено ку таранччен 100 центнер ытла вăрлăх сортланă, вăрлăх сортлас ĕçе февралĕн 15-мĕш тĕлне вĕçлеме обязательство илнĕ. Комсомол организацин хушăвĕсене кунта ытти комсомолецсем те кăмăллăн пурнăçласа пыраççĕ. Комсомолец Н. Белов колхозра счетовод пулса ĕçлет. Паллах, унăн ĕç сахал мар. Анчах вăл комсомол хушнă ĕçсенчен те пăрăнмасть. Н. Белов юлташа лашасене пăхас ĕçе лайăхлатма хушнă. Çакăн хыççăн вăл конюхсемпе пĕрре çеç мар канашлусемпе калаçусем ирттернĕ. Конюхсем халĕ чăннипех хăйсен ĕçне лайăхлатнă, выльăх апатне те типтерлĕ расходлама тытăннă.

«Красноармеец» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем вăрçă вăхăтĕнчи условисене лайăх ăнланаççĕ, кăçалхи çураки мĕнле условире иртмеллине те пĕлеççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсама кăçалхи çул çĕнĕ запаслă пайсем е çĕнĕ машинăсем килессе кĕтсе лармалли çук. Çавăнпа та ĕнтĕ пăрахăçа тухнă триера, колхозра тата колхозниксен хуçалăхĕсенче усăсăр выртакан машинăсен пайĕсене пухса юсаса, ĕçе янă. Паянхи куна триерпа кунĕн-çĕрĕн, пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Кунсăр пуçне комсомол организацийĕн секретарĕ М. Андреев юлташ ытти ялхуçалăх машинисене юсама кирлĕ запаслă пайсене пухассине те организациленĕ.

— Эпир запаслă пайсене татах та ытларах пухассишĕн тăрăшатпăр. Çапла тунипе фронт валли кирлĕ метала нумай перекетлесе хăварма пулăшатпăр,— теççĕ комсомолецсем.

Комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçе колхозри союзра тăман çамрăксене те явăçтарнă. А. Дмитриев юлташ комсомолецсемпе пĕрле уйрăмах çине тăрса ĕçлет. Вĕсем, организованно ĕçлесе, колхоза 50 центнер кĕл, 7 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса панă.

Комсомолăн Çавалкасри «Çутталла», Кăмпалти «Новый путь», Хурăн Кăкшăмри «Хĕрлĕ кавалерист» колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем те юлашки вăхăтра çуракине хатĕрленес енĕпе тимлесе ĕçлеççĕ. «Хĕрлĕ кавалерист» колхозра ветфельдшер комсомолец П. Арсентьев юлташ зооветеринари кружокĕ организациленĕ. Кружока конюхсемпе фермăра ĕçлекенсене 15—16 çынна явăçтарнă. Вĕсем занятисене йĕркеллĕ çӳреççĕ.

Çак организацисенчи комсомолецсен пуçарăвĕсем питех те лайăх. Вĕсене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытти организацисенче те анлăн сарса пыни кирлĕ.

Т. БЕЛОВ.

Куçса килнĕ ачасемпе ĕçлесси—комсомолăн ответлă задачи

Вăрçă пуçлансанах фронт çывăхĕнчи районсенчи ачасене пирĕн правительство тыла куçарчĕ. Вырăнти ĕçхалăхĕ вĕсене ăшшăн кĕтсе илчĕ. Ĕççыннисем вĕсене тăван ачисем пекех юратаççĕ, ачашлаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасене ĕççыннисем хăйсем патне усрама илеççĕ.

Куçса килнĕ ачасене пулăшас тĕлĕшпе Совет Союзĕнчи ĕççыннисем ача-пăча тăхăнмалли кĕпе-йĕм, тумтир пухас ĕçе пуçарнă. Ун пек япаласене калаçса çемьерех тупма пулать. Хăшпĕрин ачисем ӳссе çитĕннĕ, вĕсен пĕчĕк чухнехи тумтирĕсем ахалех выртаççĕ. Çавсене йăлтах тăлăха тăрса юлнă ачасем валли пуçтармалла.

Ачасем валли кĕпе-йĕм, тумтир пухас паха ĕçе пирĕн республикăри пионерсемпе комсомолецсем те тытăннă. Ишлей районĕнчи çамрăксем пурĕ 17 пальто, 7 мăшăр çăматă, 15 çĕлĕк, 39 мăшăр алшиш, 23 мăшăр чăлха, 563 тенкĕ укçан пухнă, вĕсемпе ачасем ăшă япаласем илсе панă. Япаласене пухас ĕç сарăлсах пырать.

Улатăр районĕнчи пионерсемпе комсомолецсем урăх çĕртен куçса килнĕ ачасем валли 20 пальто, 16 мăшăр атă-пушмак, 44 мăшăр кĕпе-йĕм, 28 кĕпе, 40 мăшăр чăлха, 40 çăм шарф пухнă.

Вăрнар районĕнчи Хирпуçĕнчи колхозра куçса килнĕ 5 ачана кашнинех пĕрер мăшăр çăматăпа чăлха тата кĕпе панă.

Çĕмĕрле районĕнчи çамрăксем урăх çĕртен куçса килнĕ ачасем валли укçа пухнă. Вăл укçапа ачасене 68 мăшăр кĕпе-йĕм, 16 пальто илсе панă.

Эвакуаци йĕркипе килнĕ ачасене пулăшасси республикăри ытти районсенче те ăнăçлă пырать. Анчах Канаш, Красноармейски, Çĕрпӳ, Тăвай, Куславкка районĕсенче тата Шупашкар хулинче ку ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман-ха. Çав районсенчи ВЛКСМ райкомĕсем çак ĕçе çителĕксĕр ертсе пыраççĕ.

Ку таранччен тунă ĕçсемпе лăпланса лармалла мар. Эпир тата ытларах ӳсĕмсем тума пултаратпăр. Комсомолăн колхозсенчи, хуласенчи организацисен ку ĕç çине тимлĕнрех çаврăнса пăхни кирлĕ. Кашниннех асра тытмалла: ашшĕ-амăшсăр тăрса юлнă ачасене пăхасси—комсомолăн ответлă задачи пулса тăрать.

И. МОРОЗ.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн пионерсемпе шкул ачисен отделĕн инструкторĕ.

Халăх учителĕн ячĕпе—танксен колонни

КАНАШ. Вăтакас-Татмăшри туллимар вăтам шкулта вĕрентекен учительсем Куйбышев хулинчи 13-мĕш номерлĕ чугунçул шкулĕнчи учительсен пуçарăвне хапăл туса кĕтсе илчĕç.

Халăх учителĕн ячĕпе тăракан танксен колоннине туни пирĕн халăх учителĕсем тăван çĕршывшăн, аслă Сталиншăн пĕтĕм вăйĕсене пама, тăван çĕршывшăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр тăнине кăтартса парать, — терĕç учительсем.

Çакăн хыççăн шкул директорĕ Кузьмин 30 тенкĕ, Семенова, Викторова, Камышев учительсем 20-шер тенкĕ укçа пачĕç. Çапла Вăтакас-Татмăшри туллимар вăтам шкулти учительсен коллективĕ халăх учителĕн ячĕпе танксен колоннине тума 195 тенкĕ укçа панă.

Т. ТУРХАН.

Шкулти политикăллă воспитани

Ачасене политикăллă воспитани парас ĕç халĕ, çĕршыври халăх хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн тăшмана хирĕç мĕнпур вăя хурса кĕрешнĕ вăхăтра, уйрăмах паллă вырăнта тăрать. Пирĕн ачасем Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе фашистла çĕршывсенчи халăхсен пурнăçĕ хушшинчи уйрăмлăха, вырăс халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн мĕнле çапăçнине, çав кĕрешӳре ăна камсем ертсе пынине, халăхсен ирĕклĕхĕшĕн Ленинпа Сталин тата большевиксен партийĕ мĕнле кĕрешнине, фашистла тискер кайăксем мĕнле ирсĕр те мăшкăллă ĕçсем тунине, вĕсене хирĕç пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар мĕнле кĕрешнине тата çав тăшмансене хирĕç пирĕн мĕншĕн кĕрешме кирлине лайăх пĕлчĕр,—çак ыйтусем тĕп вырăнта тăмалла вĕренекенсем хушшинче кулленех туса пыракан политикăллă воспитанире. Нумай шкулсенче çавăн пек пулса пырать те ĕнтĕ.

Ачасене политикăллă воспитани парас ĕçре, паллах ĕнтĕ, Конституципе истори урокĕсем пысăк усă пама пултараççĕ. Анчах çак уроксемпе кăна усă курни çителĕксĕр-ха. Ку тĕлĕшпе ытти урок-семпе те анлăн усă курма пулать. Хăшпĕр шкулсенче, сăмахран, изложенисемпе сочиненисем çырма ятарласах çĕнĕ темăсем суйласа илеççĕ. Тĕслĕхрен, Тивĕшри тата Ишекри вăтам шкулсене, Ярапайкассинчи тата ытти [illegible] туллимар вăтам шкулсене илсе [illegible] пулать. Изложенисемпе сочи[illegible] [illegible] шкулсенче хальхи вă[illegible] [illegible] çакăн пек çĕнĕ темăсем тăрăх çыраççĕ: «Фашистла ирсĕрсене çĕр çинчен пуçĕпех шăлса ывăтар», «Хамăрăн тăван çара мĕнпур вăйпа пулăшар!», «Фашистсем вырăс çăкăрĕпе тăранасшăн пулчĕç, анчах йăнăшрĕç», «Тăшмана ылханатпăр, ăна тавăратпăр!» т. ыт. те.

Чылай шкулсенче отрядсен сборĕсене тăтăшах ирттерессине йĕркеленĕ. Сборсенче ачасем çулпуçсен биографийĕсене вĕренеççĕ, Совет Союз Геройĕсен пурнăçĕсемпе паллашаççĕ, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан аслă вăрçă çинчен çырнă статьясене вулаççĕ т. ыт. те. Тивĕшри вăтам шкулта, сăмахран, çавăн пек сборсене 17 хут ирттернĕ; звеносен сборĕсем 36 пулнă.

Вĕренекенсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсене те шкулсенче тăтăшах ирттереççĕ. Çавăн пек пухусенче ачасене хальхи вăхăтра пулса пыракан ĕçсемпе, совет халăхĕ умĕнче тăракан пĕтĕмĕшлĕ задачăсемпе паллаштараççĕ, тĕрлĕрен темăсем тăрăх докладсем, лекцисем туса параççĕ.

Ишекри вăтам шкулта вĕренекенсен пухăвĕсене 6 хутчен туса ирттернĕ. Унта вĕсем ВЛКСМ Центральный Комитечĕ чĕнсе каланине, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухасси çинчен, укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарасси çинчен, «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухасси çинчен т. ыт. те сӳтсе-явнă.

Ишлейри вăтам шкулта фашизма хирĕçле докладсене тăтăшах ирттерсе пынă. Докладсене, сăмахран, çакăн пек темăсем тăрăх ирттереççĕ: «Нимĕçсене эпир хăçан тата мĕнле аркатнă», «Фашизм—ачасен чи усал тăшманĕ», «Тылпа фронтăн пĕрлĕхĕ» т. ыт. те. Мамăшри туллимар вăтам шкулта çавăн пек докладсемпе калаçусене пĕтĕмпе 31 хутчен ирттернĕ.

Фашизма хирĕçле докладсемпе калаçусене ирттерессине ытти шкулсенче те япăх мар йĕркеленĕ. Янăшри туллимар вăтам шкулта, сăмахран, вĕренӳ çулĕн малтанхи çурринче çакăн пек докладсем туса ирттернĕ: 1) фашизм—культура тăшманĕ; 2) шкул тата вăрçă; 3) Гитлер—ачасен чи усал тăшманĕ; 4) Совет Союзĕнчи ачасен пурнăçĕпе фашистла çĕршывсенчи ачасен пурнăçĕ.

Паллах ĕнтĕ, докладсемпе лекцисем фашизма хирĕçле темăсем тăрăх кăна мар, ытти темăсем тăрăх та пулса иртеççĕ. Салапайкасси шкулĕнче, сăмахран, докладсене çакăн пек темăсем тăрăх ирттерсе пынă: 1) Нимĕçсем йышăнса илнĕ ялсемпе хуласенчи ачасен геройлă ĕçĕсем; 2) Пионерсен тăван çĕршывшăн пыракан вăрçăри вырăнĕ; 3) Пионерсен тылра мĕнле ĕçлемелле т. ыт. те.

Çакăн евĕрлĕ темăсем тăрăхах классенче тата калаçусем те тăтăшах ирттереççĕ. Пуринчен ытла ку ĕçе класс руководителĕсем туса пыраççĕ. Вĕсемех политинформацисем ирттереççĕ. Çавăн пек калаçусемпе политинформацисене Шурчари туллимар вăтам шкулта 30 хутчен, Кипечкассинчи туллимар вăтам шкулта 28 хутчен, Хăймалакассинчи туллимар вăтам шкулта 86 хутчен, Мамăшри туллимар вăтам шкулта 105 хутчен ирттернĕ. Классенче ирттерекен информацисемпе калаçусенче, пуринчен ытларах, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе, тăван çĕршывшăн пыракан вăрçăри паттăрла эпизодсемпе тата уйрăм геройсен тĕлĕнмелле хастарлă ĕçĕсем çинчен çырнисемпе усă кураççĕ. Хăшпĕр çĕрте тата çавăн пек калаçусенче отечественнăй вăрçă участникĕсем те пулаççĕ.

Классенче ирттерекен калаçусен тематики хăшпĕр шкулсен татах та анлăрах. Сăмахран, Ишекри вăтам шкулти классенче калаçусене, фашизма хирĕçле темăсемсĕр пуçне, çакăн пек темăсем тăрăх та ирттереççĕ: килти тата колхозри ĕçсене хутшăнса ĕçлесси, шкул ачин режимĕ, Хĕрлĕ Çара кайнă çынсен çемйисене тата вĕсен ачисене пулăшасси, СССР гражданĕсене вĕренӳ тĕлĕшпе панă правăсем т. ыт. те.

Нумай шкулсенче тăван çĕршывшăн пыракан аслă вăрçă çинчен, унăн геройĕсем çинчен калакан кĕтессемпе альбомсем пур. Ишекри вăтам шкулах илер. Унта уйрăм темăсем тăрăх 8 альбом туса хатĕрленĕ. Темисем вĕсен çакăн пек: «Аркат тăшмана, шăлса ывăт ăна çĕр çинчен!», «Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать», «Тăшмана пурпĕрех çапса аркататпăр», «Сталин сăмахĕсем», «Вырăс халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç мĕнле кĕрешнĕ» т. ыт. те.

Мамăшри, Анат Кĕнерти тата ытти туллимар вăтам шкулсенче патриотла юрăсене, калавсене, фашизма хирĕçле частушкăсене вĕренес ĕçе йĕркеленĕ. Вĕренекенсем çав юрăсемпе частушкăсене шкулта кăна мар юрлаççĕ. Ачасем вĕсене колхозсенче пулакан тĕрлĕ вечерсенче те юрла-юрла параççĕ.

Пур шкулсенче те пекех ПВХО, ГСО тата ытти çавăн пек оборона кружокĕсем ĕçлеççĕ. Чылай шкулсенче программăна вĕренсе пĕтернĕ те ĕнтĕ. Çавăн пек кружоксенче вĕренсе, Тивĕшри вăтам шкулта 201 ача, Ишекри вăтам шкулта 229 ача ПВХО тата ГСО значокĕсен нормисене панă. Анат Кĕнерти туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем çав значоксен нормисене пурте панă. Кун пек шкулсем, паллах ĕнтĕ, районра сахал мар.

Стена хаçачĕсем кăларас тĕлĕшпе вара, тӳрех калас пулать, ĕç тивĕçех пымасть. Стена хаçачĕсене тăтăшах кăларса тăракан шкулсем питех те сахал. Пуринчен ытла ку ĕç пуçламĕш шкулсенче ухсахлать.

Ачасене политикăллă воспитани парас ĕçре вĕсене практикăллă ĕçе хутшăнтарса пыни те паллă вырăн йышăнса тăрать. Кунта уйрăмах Хĕрлĕ Çара пулăшас, оборона хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе ирттерекен ĕçсене шута илмелле. Анат Кĕнерти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем, икĕ хутчен воскресникре пулса, 880 тенкĕлĕх ĕçленĕ. Çак укçана ачасем пĕтĕмпех оборона фондне панă. Кунсăр пуçне тата вĕсем Хĕрлĕ Çара кайнă çынсен çемйисене çĕрулми кăларма пулăшнă. Анаткас-Маркари туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Правда» колхозра 4,25 гектар, «Красноармеец» колхозра 3,75 гектар тырă вырнă. Мамăшри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Каманин ячĕпе тăракан колхоза 4,5 гектар сĕлĕ вырса панă.

Районри шкулсенче вĕренекенсем комсомол енĕпе ирттернĕ тĕрлĕ воскресниксенче пулса 650 ĕçкунне яхăн ĕçлесе илнĕ. Çак ĕçкунĕсене пĕтĕмпех оборона фондне панă. Хĕрлĕ Çар боецĕсене шкул ачисем 1238 енчĕк парнеленĕ.

Хăймалакассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем ялсенче вулавçăсем пулса ĕçлеççĕ т. ыт. те.

Ачасен политикăллă туйăмне ӳстерес тĕлĕшпе туса ирттернĕ пысăк ĕçсенчен пĕри вăл Сталин юлташ докладне классенче вĕренес ĕçе организациленĕ пулать. Сталин юлташ докладне вĕренес тĕлĕшпе аслă классенче кашнинчех 5-шер заняти туса ирттернĕ. Кĕçĕн классенче те çавăн пекех 5-шер калаçу ирттернĕ. Кунсăр пуçне тата Сталин юлташ докладне кашни шкултах вĕренекенсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче сӳтсе-явнă.

Çакăн хыççăн,—вăл çавăн пек пулмалла та ĕнтĕ,—ачасем политикăллă ыйтусемпе интересленесси палăрмаллах ӳсрĕ. Çакă вăл хальхи вăхăтра ирттерекен политинформацисенче те аван палăрать.

Вĕренекенсене политикăллă воспитани парас тата, çавна май, вĕсен дисциплинине çирĕплетес, вĕсен пĕлӳлĕхне ӳстерес, вĕсенчен чăн-чăн патриотсем вĕрентсе хатĕрлес ыйту учительсен январь уйăхĕнче пулса иртнĕ канашлăвĕнче тĕрĕссипех хăйĕн вырăнне йышăнчĕ. Канашлу, çак ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене палăртса, ăна малалла татах та лайăхрах туса пыма пулăшакан чылай мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Р. МАЛЮТИН.

ВКП(б) Ишлей райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

МТС-сене—пиншер трактористсем!

Совет Союзӗн уйхирӗсенче ҫуркунне ӗнтӗ анлӑ ӗҫ пуҫланса каять. Сталин юлташ тырпул, аш-какай, промышленность валли чӗртавар ытларах пама чӗнни ҫине ответлесе, колхозсем тӗштырӑ тата техникӑллӑ культурӑсем акмалли ҫӗр лаптӑкне асӑлатса пыраҫҫӗ. Вӑрҫӑччен пулнипе танлаштарсан, кӑҫал ҫӗнӗ, чылай пысӑкрах ҫӗр лаптӑкне акма юрӑхлӑ тӑваҫҫӗ. Тракторсем тумалли ӗҫсен хисепӗ те пысӑкланать.

Халӗ пур районсенче те МТС-сем валли кадрсем хатӗрлес ӗҫе анлӑн пуҫарса янӑ. Кӑҫал 285 пин тракторист, 49 пин комбайнер, 11 пин механик, трактор бригадисем валли 20 пин бригадир вӗрентсе хатӗрлеме палӑртнӑ. Хӗвелтухӑҫӗнчи районсенче кадрсен хисепӗ пысӑкланать; кунта акмалли ҫӗр лаптӑкӗ те темиҫе ҫӗршер пин гектар чухлӗ ӳсет. Алтай крайӗнче иртнӗ ҫул 10 пин тракторист вӗрентсе хатӗрленӗ, кӑҫал ҫак районри МТС-сем 13 пин тракторист вӗрентсе кӑлараҫҫӗ. Красноярск крайӗнчи МТС-сем, иртнӗ ҫултипе танлаштарсан, 2 пин ытла тракторист вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ.

МТС-сен практикинче кӑҫал пуҫласа трактористсемпе комбайнерсене производствӑра ӗҫлессинчен уйӑрмасӑр индивидуальнӑй йӗркепе тата бригадӑсенче анлӑн вӗрентме тытӑнаҫҫӗ. Колхознике е колхозницӑна опытлӑ тракторист е трактор бригадин бригадирӗ ҫумне ҫирӗплетеҫҫӗ. Вӗсем ертсе пынипе вӗренекен ӗнтӗ машинӑна, ӑна мӗнле юсамаллине вӗренсе пырать. Ҫапла майпа вӗрентсе хатӗрленӗ колхозниксене вара бригада штатне илеҫҫӗ. Малтанхи вӑхӑтра вӗсем прицепщиксем пулса, каярахпа хӑйсене вӗрентекенсемпе пӗрле сменнӑй трактористсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Индивидуальнӑй майпа тата бригадӑсенче ҫуркуннеччен ҫӗнӗрен 50 пин ҫӗнӗ тракторист вӗрентсе хатӗрлемелле.

Тракторпа, комбайнпа тата ялхуҫалӑхӗнчи ытти машинӑсемпе ӗҫлеме ӑнаҫлӑн вӗренсе пынӑ хӗрарӑмсен хисепӗ ӳссех пырать. Пенза облаҫӗнче, сӑмахран, МТС-сенчи курссенче тата ялхуҫалӑх механизацийӗн шкулӗсенче 4 пин ытла колхозница вӗренет. Ку ӗнтӗ мӗнпур вӗренекенсен хисепӗн ҫурри ытла пулать.

Мускав, Тула, Калинин облаҫӗсен фашистла захватчиксенчен ирӗке кӑларнӑ районӗсенчи МТС-сем ҫумӗнче курссем нумай уҫаҫҫӗ. Ҫуркуннеччен пӗр Мускав облаҫӗнче ҫеҫ 3 пин тракторист вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ. (ТАСС).

Ялхуҫалӑх машинисене юсамалли пайсем ытларах пухар

Сталинград облаҫӗнчи Иловлино МТС-ӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем пуҫарнипе пирӗн республикӑра та колхозсенчи, МТС-сенчи, предприятисенчи ҫамрӑксем ялхуҫалӑх машинисене юсама кирлӗ пайсене пухма тытӑнчӗҫ.

Республикӑри чылай организацисенче ку ӗҫ организованно пырать. Нумай ҫӗрте машина пайӗсене пухас ӗҫе ялхуҫалӑхӗнчи специалистсене явӑҫтарнӑ.

Чкаловски МТС-ри комсомолецсем (организацин секретарӗ Архипов юлташ) 31 коленчатӑй вал, 54 цилиндр, 44 подшипник, 173 поршень унки, 46 поршень тата ытти машина пайӗсене тупса пуҫтарнӑ.

Шӑхасан районӗнчи колхозсенчи комсомолецсем машина пайӗсене пухас тӗлӗшпе колхозниксем патне килӗрен ҫӳреҫҫӗ. Ку таранччен вӗсем 17 сурпан, 13 плуг тимри, 4 плуг ҫӗҫҫи, 21 тӗнӗл, 5 корпус тупнӑ. Вӗсем мӗн колхоз пуҫланнӑранпах колхозниксем патӗнче выртнӑ. Колхоз ҫав вӑхӑтра запаслӑ пайсем ҫук пирки, машинӑсене юсамасӑр тӑнӑ.

Шупашкар районӗнче машина пайӗсене пухас ӗҫе пионерсемпе шкул ачисем активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем 8 шестерня, 27 болт, 46 гайка, уҫӑсем, 600 грамм пӑхлан пухнӑ.

Машина пайӗсене пухас ӗҫе Вӑрмар районӗнче те начар мар йӗркеленӗ. Унта ялхуҫалӑх машинисен пайӗсене, инвентарьсемпе металсем пухас енӗпе ӗҫлеме ятарласа 8 бригада организациленӗ. Районри ҫамрӑксем пурӗ 100 килограмм винтсемпе болтсем, 3 шестерня, 3 плуг тӗнӗлӗ, 2 кайри кустӑрма, 3 шкиф, 3 вал, пӗр радиатор, 3 трактор ҫиййӗ, 3 трактор гильзи, молотилка чӗнӗ тата ытти тӗрлӗ машинӑсен 15 пайне тупса пуҫтарнӑ. Ку тӗлӗшпе комсомолӑн МТС ҫумӗнчи, Энӗшпуҫ колхозри тата крахмал завочӗ ҫумӗнчи организацийӗсем аван ӗҫлеҫҫӗ.

Ишлей районӗнчи ҫамрӑксем те 17 уҫӑ, винтсемпе гайкӑсем 86 штука, 8 килограмм пӑхӑр пухнӑ.

Ҫакӑнпа пӗрлех машина пайӗсем пухас ӗҫ хӑшпӗр районсенче япӑх пыкине те палӑртмалла. Уйӑрмӑнах Элӗк районӗ ку тӗлӗшпе нимӗн те тумасть. ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ, вӑлах машина пайӗсене пухас тӗлӗшпе организациленӗ комисси председателӗ К. Соловьев юлташ ку таранччен те ӗҫе йӗркелемен. Ҫитменнине ӗҫе мӗнле майлаштарса ярасси ҫинчен комисси членӗсем пӗрре те пухӑнса каламан. Ҫавӑнпа вӗсем районӗпе те пӗр машина пайӗ те пухман.

А. КУЗНЕЦОВА.

Фронтри боецсем валли ӑшӑ тумтирсем

КАЛИНИНО. Сӑкӑт ялсоветӗнчи колхозсенче ҫак кунсенче Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем хатӗрлес ӗҫе чылай вӑйлатрӗҫ. Ялсовет исполкомӗн председателӗ Ф. Никитин юлташ ӑшӑ тумтирсем хатӗрлес тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссин ӗҫне куллен йӗркеллӗн ертсе пырать. Комисси членӗсем колхозсенче ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫе агитациллӗ-ӑнлантаруллӑ ӗҫпе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Хаҫатра пичетленекен фронтри хыпарсене колхозсемпе колхозницӑсене вуласа, ӑнлантарса параҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли Сӑкӑтри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем ҫак кунсенче 7 мӑшӑр ҫӑматӑ, 10 мӑшӑр алшиш, 8 мӑшӑр носки, 30 тир пухса пачӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫре колхоз председателӗ Н. Герасимов, комсомолӑн пуҫламӗш организаци секретарӗ Л. Смирнов юлташсем пример кӑтартаҫҫӗ.

Кивҫурт Мӑтарти «Хӗрлӗ ҫӑлтӑр» колхоз членӗсем те юлашки вӑхӑтра виҫӗ мӑшӑр ҫӑматӑ, 10 тир, 5 мӑшӑр алшиш-носкисем пухса панӑ. Ҫакӑн пекех Ҫӗньял Явӑшри колхоз членӗсем те Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем параҫҫӗ.

Г. МАТВЕЕВ.

Амӑшӗ

(Юлашки, пуҫламӗшӗ 2-мӗш страницӑра)

ӗҫтине каласа парсан ҫеҫ сирӗн ывӑлӑр пурӑнма пултарать», тесе каланӑ Хавзе. Александра Мартыновна ура ҫине ҫӗкленнӗ, пурин ҫине те чармак куҫӗсемпе пӑхса илнӗ те: «Ачана хӗрхенӗр, вӑл нимӗншӗн те айӑплӑ мар», тенӗ пӑшӑлтатса. Ӑна штыкпа ҫапнӑ. Вӑл каласма чарӑнса йынӑшса янӑ та сасартӑк: «Эсир пирӗн ҫӗршыва юнпа хупласа лартаймӑр. Манӑн ывӑла вӗлерсен— манӑн вӑрман тулли ывӑлсем, отрячӗ-отрячӗпе ывӑлсем!» тесе кӑшкӑрса янӑ. Ӑна татах ҫапнӑ та вӑл тӗршӗнсе аннӑ. Хаазе ӑна атӑ кӗлипе тапса хӗнеме тытӑннӑ. Анчах унӑн асапӗ ҫапах та вӗҫленмен-ха. Александра Мартыновнӑна халь вӑрман хӗррине те пулин ҫитсе, партизансем патне каймалли ҫула кӑтартма хушнӑ. Вӑл ура ҫине ҫӗкленнӗ те хӑйне атӑпа пальто пама ыйтнӑ. Вӑл хӑй утса ҫӳреме те пултарайман. Ӑна ҫуна ҫине лартнӑ. Александра Мартыновна нимӗҫсене хӗвелтухӑҫ еннелле илсе кайнине Ефим Цыганов курнӑ. Партизансен отрячӗ хулан хӗвеланӑҫ енчи вӑрманӗнче вырнаҫнӑ пулнӑ. Ҫӗрле пулас умӗн ӑна, хӗнесе юнлантарса пӗтернӗскерне, хула урамӗ тӑрӑх каялла турттарса таврӑннӑ. Комендатурӑра ӑна хӑйӗн вӗлернӗ ывӑлне кӑтартнӑ. Вӑл хӑйӗн асапӗ пуҫланнӑранпа чи малтанхи хут ҫакӑнта, урӑх вӑйӗ юлман пекех, макӑрса янӑ. Ӑна комендатура вырнаҫнӑ шкулӑн пӳрт умне илсе тухнӑ. Унта ҫынсем тӑнӑ; вӗсене хӑваласа салатнӑ. Александра Мартыновна куҫӗсене, куҫӗсем ӑна хӑйӗн вӑйсӑрлӑхне кӑтартса парассинчен чикленнӗ пек пулса, шӑлса типӗтнӗ те пӗтӗ васкаса калаҫма тытӑннӑ: «Тискер кайӑксем умӗнче пуҫӑрсене ан тайӑр. Эпир таврӑнас вӑхӑт ҫывхарса килет. Сывӑ пулӑр, манӑн тӑванӑмсем!» Ӑна прикладпа тӗкнӗ, вӑл юр ҫине шуса ӳкнӗ те татах ҫӗкленнӗ. Вӑл, ҫараураннскер, асапланса пӗтнӗскер, шӑнса кайнӑскер, шыҫӑннӑскер, палачсен вӗҫӗмсӗр патакне тӳснӗскер, татах калаҫма пуҫланӑ. Унӑн сасси тӗттӗме ҫурса янӑрана: «Амӑшӗсем, тӑванӑмсем, илтетӗр-и эсир мана? Эпӗ тискер кайӑксен аллинчен вилӗм илетӗп, ҫамӑн ывӑлӑма та шеллемерӗм, анчах та хамӑн тӗрӗслӗхе сутмарӑм. Илтетӗр-и эсир мана, ача амӑшӗсем?» Анчах та нимӗҫсен салтакӗсем пурне те хӑваласа салатнӑ. Александра Мартыновнӑна картишне сӗтӗрсе кӗнӗ те, вӑл воин пек, совет ҫӗршывӗн вилӗмсӗр геройӗ пек, юлашки хут хаяррӑн кӑшкӑрса пурӑнӑҫран уйӑрӑличчен, ӑна ҫаплах штыксемпе чикнӗ, хӗненӗ, татах штыксемпе чикнӗ.

Тӑшмана пӗтӗмпех аркатса тӑкиччен, совет ҫӗршывӗнчи тӳрӗ чӗреллӗ пур ҫынсем те, ӑшра амӑшӗн чӗри тапакан пур ҫынсем те Александра Мартыновна Дрейманӑн вилес умӗнхи сассине манмӗҫ. Ҫак кӑшкӑру, асаплӑ чун тӗпӗнчен тухнӑскер, ӗмӗрех янӑраса тӑрӗ, тӑван ҫӗршыва, ирӗклӗхе, хӑйӗн ҫӗршывне пӗтӗм чун-чӗререн юратса уншӑн юлашки сывлӑш пухиччен ҫирӗпшӗн тӑнӑ хӗрарӑмӑн — ача амӑшӗн сӑн-сӑпачӗ халӑх шухӑшӗнче ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗ. Ӗмӗр-ӗмӗр вилӗмсӗр мухтав ӑна!

(«Правда», февралӗн 7-мӗш).

О. КУРГАНОВ.

Турци журналисчӗ тӗнӗл ҫӗршывӗсен суя пропагандине питлесе ҫырать

СТАМБУЛ, февралӗн 9-мӗш. (ТАСС). Юлашки вӑхӑтсенче Германипе Итали пропаганди Турцине тӗнӗл держависем майлӑ вӑрҫа явӑҫтарас шутпа туса пыракан провокациллӗ кампание вӑйлатнӑ. Германи хаҫачӗсенче темӗнле Клаус Нюхленӑн статьине пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав ҫын шанчӑклӑ пек пулса: «Нимӗҫсем Балканра ҫӗнтерӳ туни» Турци политикине улӑштарчӗ, Турци халӗ ӗнтӗ Гитлерӑн Европӑри «ҫӗнӗ йӗрки» ҫине кӑмӑллӑн пӑхать, тесе ҫырать. «Ени Сабах» хаҫатра Турцин паллӑ журналисчӗ, меджлис депутачӗ Джахид Ялчин Нюхлена питлекен статья пичетлесе кӑларнӑ. Ялчин ҫапла ҫырать: Гитлерӑн «Европӑри союзӗ» «асап-хӗнуйӑн, чухӑнлӑхӑн, восстанисен союзӗ» пулса тӑрать. Европӑри чӑн-чӑн союз мӗнпур нацисен ирӗклӗхне, никама пӑхӑнманлӑхне хисепленин принципӗсем ҫинче ҫеҫ пулма пултарать, ҫав союзра СССР хӑйне тивӗҫлӗ паллӑ вырӑн йышӑнӗ. Нюхлен,—тет малалла Ялчин,— Турцин Германи ҫумне явӑҫмасӑр урӑх ҫулӗ ҫук пекех, Турци ҫумне ирӗксӗрлесех хӑйӗн шухӑшне ҫыхӑнтарать. «Ҫакна татӑклӑнах тата ҫине тӑрсах сивлесе,—тесе ҫырать Ялчин,—эпир ҫав журналиста ҫапла калатпӑр: вӑл йӑлӑш алӑка пырса шаккать, ун пек йӗкӗлтенипе те, хӑратнипе те вӑл Турцие вӑрҫа явӑҫтараймӗ. Ҫавнашкал пропагандӑн тӗллевне ӑнланса илме пирӗн ӑс ҫителӗклӗ-ха, ӑна сирсе яма та пирӗн хӑюллӑх пур».

Италири радион провокациллӗ кампанийӗ ҫинчен каланӑ май, Джахид Ялчин «Хабер» хаҫатра ҫапла ҫырать: ҫав кампани ӗнтӗ тӗнӗл держависем Совет Союзне хирӗҫ туса пыракан вӑрҫа Турцие хӑйсем майлӑ явӑҫтарма тӑрӑшнине кӑтартса парать. Тӗнӗл держависем темӗн тӗрлӗ ҫӑмӑллӑхсем те пама пулса,—тесе ҫырать вӑл,—Турцие вӑрҫа явӑҫтарма тӑрӑшаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вырӑссем тӗнӗл держависемшӗн хӑрушӑ тӑшмансем пулнине кӑтартса пачӗҫ. Агрессорсем халӗ ҫакӑн пек лару-тӑрушӑн питӗ пӑшӑрханаҫҫӗ, вӗсем Германишӗн Турци ҫамрӑкӗсен юнне юхтарма тӑрӑшаҫҫӗ. Хӑшпӗр ҫӗршывсенче вӗсен ҫакӑн пек тума май килчӗ. Ҫакӑн пек хӑтланнисем пурӗпӗр усӑ парас ҫук, тесе пӗлтерет Ялчин. «Пире пӗр хутчен инкек кӑтартрӗҫ,—тесе ҫырать вӑл, иртнӗ тӗнче вӑрҫине аса илсе.—Пирӗн чылаях пысӑк опыт пур, эпир хамӑрӑн кӳршӗсен ҫӗрӗсене илесшӗн хапсӑнмастпӑр».

Тепӗр статьяра Ялчин хӑшпӗр ҫӗршывсене тӗнӗл держависене пӑхӑнтарни мӗн патне илсе ҫитерине кӑтартса парать. Ҫав ҫӗршывсем, — тесе ҫырать автор, — «хӑйсен хӑравҫӑлӑхӗшӗн, малашнехине курма пултарайманнишӗн асапланса пурӑнаҫҫӗ. Тӗнӗл держависене хирӗҫ тӑма килӗшмен ҫӗршывсем халӗ пурте вӑрҫа хутшӑннӑ. Кам хӑйӗн тӑван ҫӗршывне хӳтлеме килӗшмен, вӗсем халӗ чуралантаракансем пуҫпулса тӑрассине хӑйсен енӗпе хӳтӗлесе пыраҫҫӗ».

Гитлеровецсем Танжерта тӑвакан провокацисем

ЛОНДОН, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, февралӗн 7-мӗшӗнче гитлеровецсем Танжерта провокаци тӑвас шухӑшпа Англие хирӗҫле выступлени организациленӗ. Гитлеровецсене сутӑннӑ ҫынсем Англин почтамтне тата темиҫе магазинне сиенленӗ.

Тӗнӗл держависен агенчӗсем ҫак кунсенче Танжерта татах тепӗр провокаци тунӑ. Англин Гибралтартан Танжера пырса ҫитнӗ дипломатиллӗ курьерӗн чемоданӗ ӑшне бомба чиксе хунӑ пулнӑ. Бомба ҫурӑлса кайнипе ҫынсем вилнисем пулнӑ.

Англин Танжерти генеральнӑй консулӗ Испанин Танжерти войскисен главнокомандующине Уриате генерала тӗнӗл держависен Англие хирӗҫле провокациллӗ выступленийӗсем пирки хыттӑн протестленӗ.

Тӗнӗл держависен агенчӗсем Англипе Испани хушшинчи отношенисене ҫавнашкал майсемпе пӑсма хӑтланни ҫине Испани правительствине ҫавӑрӑнса пӑхма хушаҫҫӗ пулмалла, тесе шутлаҫҫӗ Лондонра.

Виши правительстви Германин Ливири ҫарне вӑрҫӑ материалӗсем тӑратать

ЛОНДОН, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). Англин информаци министерстви ҫапла пӗлтерет: Лондонри авторитетлӑ ҫынсем каланӑ тӑрӑх, Виши правительстви Германин Ливири ҫарне вӑрҫӑ материалӗсем тӑратас ӗҫе хутшӑннӑ тесе шантарсах калама пулать. Виши правительстви вӑрҫӑ материалӗсене Туниса ярать, вӗсене вӑл Франци ҫарӗ валли тесе тата перемири условийӗсем тӑрӑх Германие панӑ материалсем вырӑнне тесе ярать. Анчах та ҫав материалсем вӗсем Франци ҫарӗ аллине кӗмеҫҫӗ. Вӗсене Тунисран Ливие яраҫҫӗ. Ҫав материалсене турттаракан суднӑсене ҫул ҫинче Германи самолечӗсем хураллаcа пыраҫҫӗ-и тен. Германия Виши правительствинчен илсе тӑракан материалсене Испанин хӗвелтухӑҫ ҫыранӗ тӑрӑх Орана яраҫҫӗ, унтан вара вӗсене чугунҫул тӑрӑх Туниса илсе пыраҫҫӗ. Пор Вандр хулине январь уйӑхӗн вӗҫӗнче пырса курнӑ ҫын ҫапла калать: эпӗ унта зенитнӑй орудисем, 155 миллиметрлӑ тупӑсем тата боеприпассем тиенӗ судно куртӑм, вӑл судно ӗлӗк Данин пулнӑ пулмалла, тет. Ҫав ҫын каланӑ тӑрӑх, порт вӑл пысӑк мар, анчах та ӑна ятарласа ҫавӑн пек грузсем йышӑнма юрӑхлӑ тунӑ. Тӗрӗслесе пӑхман хыпарсем тӑрӑх, вӑрҫӑ хатӗрӗсен пӗр пайне Испанирен Марокӑна яраҫҫӗ, Марокӑран вара типҫӗр тӑрӑх Ливие илсе пыраҫҫӗ.

Гитлер Виши правительствине ҫӗнӗрен хӗсет

ЛОНДОН, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). «Дэйли мэйл» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Германин тинӗс-ҫар флочӗн главнокомандующийӗ генерал Редер Дарланпа виҫӗ сехет хушши калаҫнӑ. Редер Германин Францири тинӗс-ҫар базисемпе авиаци базисене пӑхса тухма кайнӑ пулнӑ. Калаҫу ҫав вӑхӑтра Францин пӗр пӗчӗк хулинче пулса иртнӗ. Редер ҫав калаҫура Германи аллине Францин флотне ҫеҫ мар, ҫавӑн пекех тата Францин Ҫурҫӗр-Африкӑри порчӗсемпе авиаци базисене те пама ыйтнӑ.

Гитлеровецсем Франци халӑхне пӗтсе ларас шӑпа умне тӑр тнӑ

АНКАРА, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). «Бугюн» хаҫат Франци халӑхӗ гитлерла оккупантсен пусмӑрӗ айӗнче ҫавтери асапланса пурӑнни ҫинчен статья ҫырса кӑларнӑ. Нимӗҫсем хуҫаланса, ҫаратса пурӑннӑ пирки Франци халӑхӗ хушшинче вилекенсен шучӗ питех те ӳссе кайнӑ. Хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, 1940 ҫулта Францире «вилнисен шутне ҫуралнисен шучӗпе танлаштарсан, 199.953 ҫын ытларах вилнӗ. 1939 ҫулпа танлаштарсан, вилнисен шучӗ 19 процент ӳснӗ. Халӑх ҫавӑн пек нумай вилни халӗ Франци халӑхӗ ӗмӗрте курман нуша тӳснинчен, чир-чӗр сарӑлнинчен, выҫлӑхран килет. Пулас ҫамрӑк ӑрӑва тӳрремӗнех хаяр хӑрушлӑх кӗтсе тӑрать. Авланакансен шучӗ 32 процент чакнӑ, ҫуралакансен шучӗ 9 процент сахалланнӑ, ачасем вилесси 45 процент ӳснӗ».

Юлашкинчен хаҫат ҫапла ҫырать: Германи оккупациленӗ ытти ҫӗршывсенче те пурнӑҫ Франциринчен лайӑхах мар.

Финляндири выҫлӑх

СТОКГОЛЬМ, февралӗн 9-мӗш. (ТАСС). Финляндире экономика тӗлӗшӗнчи лару-тӑру питӗ юхӑнса кайнӑ. Финлянди халӑхӗ ҫавтери нуша тӳснӗ, унӑн кӗлмӗҫлӗхне финсен хаҫачӗсем те пытарса хӑварма пултараймаҫҫӗ. Ҫӗршыври лару-тӑру ҫинчен чӑннипе камӑн пӗлес килет, тесе ҫырать «Ууси Суоми» хаҫат, «вӑл Хельсинки тулашне кайса пӑхтӑр, фронтра вилнӗ салтаксен ҫемьисен бюджечӗпе паллаштӑр. Вӑл ҫын вара государствӑран илекен ҫавтери пӗчӗк пособи нормӑпа паракан продуктсене те туянма ҫитменнине курӗ. Хваттер укҫи тӳлеме, ҫутӑшӑн тӳлеме, кӗпе-тумтир туянма ӑҫтан укҫа тупмалла-ха?»

«Хельсинкири ҫынсем салака (вӗтӗ пулӑ) туянас тесе сехечӗ-сехечӗпе сивӗ ҫӗрте черетре тӑраҫҫӗ,—тесе ҫырать «Суомен социалидемокраатти» хаҫат,— анчах та пиншер ҫынсенчен вуншар ҫынӗ ҫеҫ салтакӑн мӗскӗн порцийӗсене туянма пултараҫҫӗ». Швецире тухса тӑракан хаҫатсем Финляндири ача-пӑчасем продовольстви илме черетре тӑнӑ чухнех шӑнса вилнин тӗслӗхӗсем ҫинчен ҫырса пӗлтереҫҫӗ.

«Илта саномат» хаҫат апат-ҫимӗҫсен хакӗ малалла ӳсни ҫинчен тата хваттер укҫипе налогсем ӳсни ҫинчен ҫырса пӗлтернӗ май ҫапла палӑртать: «Финлянди влаҫӗсем халӑхӑн нушисем ҫинчен «тӑрӑшатпӑр» тесе шавлӑн пӗлтерни хут ҫинче ҫеҫ тӑрса юлать».

«Кантан лехти» хаҫат нумай ачаллӑ рабочисен ҫемьисен положенийӗ уйрӑмах йывӑрри ҫинчен ҫырса пӗлтерет. «Сакӑр ача амӑшӗ» тесе алӑ пуснӑ статьяра ҫапла каласа панӑ: нумай ачаллӑ рабочисен ҫемьисен положенийӗ мирлӗ вӑхӑтра та йывӑр пулнӑ, халӗ ӗнтӗ вӑл чӑтма ҫук йывӑрланса ҫитнӗ. «Пирӗн ытларах ача ҫуратмалла тӑвасси ҫинчен хытӑ кӑшкӑрашаҫҫӗ,—тесе ҫырать «Сакӑр ача амӑшӗ»,—анчах та ачасене выҫӑпа вилесрен ҫӑлса хӑварас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ».

«Рабочисен ҫемьисенчен нумайӗшӗсем ӗнтӗ эрне ытла ҫӑкӑр та, ҫӗрулми те илеймеҫҫӗ»,—тесе ҫырса пӗлтерет Экенес хулинчен пӗр рабочи.

Рузвельт Чан Кай-ши патне янӑ послани

ВАШИНГТОН, февралӗн 9-мӗш. (ТАСС). Рузвельт Чан Кай-ши патне посланин янӑ. Хӑйӗн посланийӗнче вӑл Китая 500 миллион доллар кивҫен пама сӗннине сенатпа представительсен палати пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса ырланишӗн, ҫакӑ халь ӗнтӗ закон пулса тӑнишӗн вӑл хӑй те, Америка правительстви те тата Пӗрлешӳллӗ Штатсен халӑхӗ те питӗ ӑшшӑн кӑмӑлланине палӑртать. «Конгресс ҫак йышӑнӑва питӗ хӑвӑрт тата пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса йышӑнни, Америкӑра ӑна пысӑк хавхаланупа кӗтсе илни,—тенӗ посланире, — Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствипе халӑхӗсем Китай ҫине мӗнтери чӗререн, ӑшшӑн кӑмӑлласа, хавхаланса пӑхнине кӑтартса парать. Ҫавнашкалах ҫакӑ ӗнтӗ ирӗклӗхшӗн пыракан аслӑ кӗрешӳре эпир хамӑрӑн тусӑмӑрсене татӑклӑ та конкретнӑй пулӑшу пама тӑрӑшнине кӑтартса парать». Посланире шантарса ҫапла каланӑ: «Хальхи вӑхӑтра Америка конгресӗ уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗ Китай правительствипе Китай халӑхне хӑйсен ҫӗршывӗ ҫине хӗҫпӑшалпа пырса тапӑннине пула экономикӑпа финанс тӗлӗшӗнчен тухса тӑнӑ чылай йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме май парать, ҫакӑ вӑл тата пирӗн пӗтӗмӗшлӗ тӑшмана хирӗҫ ӑнӑҫлӑн кӗрешмешкен питех те кирлӗ производотвӑна йӗркелеме, материалсем туянма пулӑшу парӗ».

«Эпӗ сире саламлатӑп, — тенӗ посланин юлашки пайӗнче, — сире пур ырлӑхсене те сунатӑп. Пирӗн пӗрлӗхлӗ ырлӑх, пӗрлӗхлӗ тӗллев тата пулас пӗрлӗхлӗ ҫӗнтерӳ ячӗпе эпӗ типҫӗрпе тинӗс урлӑ сирӗн алла юлташла чӑмӑртатӑп».

Рузвельт тинӗс-ҫар вӑйӗсене хӗҫпӑшаллантарма укҫа парасси ҫинчен калакан закон проектне алӑ пусни

ВАШИНГТОН, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен конгресӗ тинӗс-ҫар вӑйӗсене хӗҫпӑшаллантарма 26.495 миллион доллар укҫа парасси ҫинчен калакан закон проектне йышӑннӑ пулнӑ. Халӗ Рузвельт ҫав закон проектне алӑ пуснӑ. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хӑйсен ӗмӗрӗнче ҫар ӗҫӗ валли ҫавӑн чухлӗ пысӑк укҫа пани ку таранччен пулман.

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче вӑрҫӑ ӗҫӗ валли ҫӗнӗрен укҫа-тенкӗ хушса пани

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Рузвельт конгресран ҫар валли татах 22 миллиард та 889 миллион доллар, суту-илӳ флотне тума 3 миллиард та 852 миллион доллар хушса пама ыйтнӑ.

Хӗҫпӑшала кивҫен е арендӑна памалли закон тӑрӑх президент хӑй кирлӗ тесе шутлать пулсассӑн, законопроект ҫав хушса панӑ укҫа-тенкӗ шучӗпе хӗҫпӑшала урӑх ҫӗре яма та ирӗк парать.

Германи посольствинче ухтару туни

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Бразили полицийӗ Рио-де-Жанейро хулинче Германи посольствин ҫуртӗнче ухтару тунӑ. Ухтару вӑхӑтӗнче посольствӑра кӗске хум ҫинче ӗҫлекен пит те хӑватлӑ радиопередатчик тупнӑ.

Бразили влаҫӗсем халь тата ҫакна пӗлнӗ: Бразили ҫӗршывӗн ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ районӗсенче вӑрттӑн радиоустановкӑсем ӗҫлеҫҫӗ иккен. Ҫав радиоустановкӑсене ҫывӑх вӑхӑтрах шыраса тупса конфискацилеҫҫӗ.

Францие Бельгире ерекен чирсем сарӑлни

ЛОНДОН, февралӗн 9-мӗш. (ТАСС). Англири хаҫат-журналсем ҫапла ҫыраҫҫӗ: Бельгипе Францире ерекен чирсемпе вилекенсен шучӗ юлашки вӑхӑтра икӗ хут ытла ӳссе кайнӑ. Францин хӗвелтухӑҫӗнче вар-хырӑм тифӗпе нумай чирлеҫҫӗ. Ку чир пуринчен ытларах Эльзас Лотарингире сарӑлнӑ, мӗншӗн тесен оккупантсене курайман халӑха гитлеровецсем чӑтма ҫук йывӑр условисенче усраҫҫӗ. Ҫав чиртен те хӑвӑртрах шатраллӑ тиф чирӗ сарӑлса пырать. Шатраллӑ тиф чирӗ Мюлузӑра, Страсбургра тата Рейн ҫинчи ытти хуласенче, ҫавӑн пекех Лилльре тата Брюсельре пуринчен те ытларах палӑрать. Тиф кунта Германирен ерсе килет. Германие ҫав чире фронтран пыйтлӑ салтаксем илсе таврӑнаҫҫӗ. Франци влаҫӗсем тиф сарӑлни ҫинчен никама та пӗлтерес мар тесе хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах халь ҫакӑ паллӑ пулчӗ: тифпа чирлекенсем валли Парижра, Лионра тата чылай ытти пысӑк хуласенче те уйрӑм больницӑсем уйӑрса хунӑ. Францири халӑх сывлӑхӗ тӗлӗшпе ӗҫлекен органсен официальнӑй сведенийӗсем тӑрӑх, Франци халӑхӗ выҫӑ пурӑннӑ пирки, Францири халӑх хушшинче, пуринчен ытларах рабочисем хушшинче, цынга чирӗ сарӑлать, туберкулез тата ытти чирсемпе чирлекенсен шучӗ те питӗ вӑйлӑ ӳсет. Халӑх начарланса, имшерленсе ҫитнипе ҫав чирсемпе вилекенсен процентчӗ питӗ хӑпарса кайнӑ.

Иртӗхсе кайнӑ мракобессем

СТОКГОЛЬМ, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). Финсен «Аян Суунта» хаҫачӗ хӑйӗн умстатьинче сутӗҫ министерствине гимназирен вӗренсе тухма ӗлкӗреймен ҫамрӑксене, вӗсене ҫар службине мобилизациленӗ май, диплом парса яма хушса ҫырать. «Ҫӗршыва малашне вӗреннӗ ҫамрӑксем мар, ҫар валли усӑллӑ ҫамрӑксем кирлӗ» тесе намӑса пӗлмесӗр ҫырать хаҫат.

Ҫав хаҫатах Карело-финн ССР-ӗн нимӗҫсемпе финсен ҫарӗсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче культурӑпа калӑҫ парӗ пулнӑ вырӑнта оккупантсем «чаплӑ масар уҫнӑ» тесе ҫырать.

Шпионла ӗҫсем тунӑшӑн

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Турци влаҫӗсем аслӑ Муфти Иерусалимӑн пултӑрне тата Турцире, Сирире, Иракпа Палестинӑра шпионла ӗҫсем туса пынӑшӑн нумаях пулмасть арестленӗ ытти 14 араба ҫӗршывран кӑларса яма шутлаҫҫӗ, тесе пӗлтерет.

* * *

ЛОНДОН, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Турцири полици 8 араб-эмигранта халех Турцирен тухса кайма хушнӑ. Ҫав ҫынсем хӑшпӗр нимӗҫсемпе пӗрле Турцин интересӗсене хирӗҫ ӗҫленӗ тесе ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

* * *

СТАМБУЛ, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). Илнӗ сведенисем тӑрӑх, Турци влаҫӗсем юлашки виҫӗ кун хушшинче Стамбулпа Измирта араб-эмигрантсем хушшинче ҫӗнӗрен 20 ҫынна арестленӗ.

Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ

АМЕРИКА ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑпа Филиппин войскисем Батаан ҫурутравӗ ҫинче (Филиппинра) японецсене вӑйлӑн хирӗҫ пырса ҫапнӑ.

Америкӑн Манила заливне кӗнӗ ҫӗрте тунӑ укреплениӗсем ҫине персе тӑнӑ Японин батарейисене Америкӑн форчӗсенчен персе пусарнӑ. Снарядсем темиҫе ҫӗрте те тӗл лекнине палӑртнӑ, ҫавна пула японецсен батарейисенчен персе тӑрасси чарӑнса ларнӑ. Батаан ҫурутравӗ ҫинчи фронтӑн хӑшпӗр участокӗсенче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Япони войскисем темиҫе хутчен те Америкӑн оборона туса тӑракан войскисем хушшине саваланса кӗрсе кайма хӑтланнӑ, анчах та кашнинчех японецсене каялла сире-сире пӑрахнӑ. Фронтӑн мӗнпур линийӗ тӑршшӗпех Японин пикировка тӑвакан бомбардировщикӗсем ҫапӑҫаҫҫӗ.

АНГЛИ ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

ЛОНДОН, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Англи командованийӗн коммюникинче, Англи войскисем Сингапурта противника хирӗҫ вӑйлӑн тӑнӑ пулин те, вӗсен каялла чакма тивнӗ тесе кӑтартса панӑ. Утравӑн ҫурҫӗр енчи ҫыран-хӗрринче ҫӗрӗпех пулеметсенчен тата артиллерирен персе тӑнӑ. Утрав ҫине Японин ҫӗнӗ чаҫӗсем пырса ана-ана юлаҫҫӗ.

Лондонра илнӗ сведенисем тӑрӑх, хӑшпӗр пунктсем темиҫе хутчен те алран-алла куҫнӑ тесе шутлама пулать. Утрава хӳтӗлекенсен фронтӑн вӑрӑма тӑсӑлакан линине тытса тӑма тивет, ҫавӑнпа та ӗнтӗ японецсем хӑйсем хӑш пункта атакӑлас теҫҫӗ, ҫавӑнта вӑй нумайрах пухса тӑратма пултараҫҫӗ.

Салвин юханшыв районӗнче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙӖН КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Голланди Индийӗн командованийӗ кӑларнӑ коммюникере: февралӗн 10-мӗшӗнче японецсем Целебес утравӗн кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнче Макассар районӗнче хӑйсен войскисене антарса хӑварма тытӑннӑ, тесе кӑтартса панӑ.

Борнео утравӗ ҫинче Япони войскисен пысӑках мар групписем утравӑн территорийӗ ӑшнелле шалалла куҫса пыраҫҫӗ. Амбоин утравӗ ҫинче противника хирӗҫ ҫапӑҫу пырать.

ЯПОНИ ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

ТОКИО, февралӗн 10-мӗш. (ТАСС). Официальнӑй сведенисем тӑрӑх, Япони войскисем февралӗн 9-мӗшӗнче каҫалапа Сингапур утравӗ ҫинчи Тенда аэродромне йышӑнса илнӗ тата малаллах куҫса пыраҫҫӗ. Ҫапӑҫусем Тенда юханшывӗн районӗнче пыраҫҫӗ.

Китайри вӑрҫӑ

Кӑнтӑр Китайра Кантонран хӗвелтухӑҫнерех Китай войскисем, контрнаступлени пуҫласа ярса, Вэйчжоу тата Боло хулисене йышӑнса илнӗ. Япони войскисем Хӗвеланӑҫнелле чакса пыраҫҫӗ. Вэйчжоуран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерех сӑртлӑ районсенче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа партии пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 373 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф: 6, 58 64 [illegible]